Çул урлă каçакансене… çу хыптарасшăн ● 5 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

Чăваш ХЁРАРĂМĔ

35 (853) №, 2014, çурла, 30 Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Чăваш Енри хаклă шкул ачисемпе студентсем тата педагогсем! Сире Пĕлӳ кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ – чи çутă та савăнăçлă уявсенчен пĕри. Çак кун шкула пуçласа каякан ачасемпе пуçламăш курсра вĕренекенсемшĕн пĕрремĕш шăнкăрав хаваслăн янăрать тата вĕсемшĕн тĕрлĕ çĕнĕлĕхпе пуян пирвайхи вĕренӳ çулĕ пуçланать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕ – хăйсен вĕренекенĕсемпе воспитанникĕсене пĕлӳ çурчĕн алăкĕ умĕнче кĕтсе илекен педагогсемшĕн те хумхануллă вăхăт. Вĕсен ырми-канми, чунтан тăрăшса тăвакан ĕçне тата тĕрлĕ енлĕ пултарулăхне пула шкул ачисемпе студентсем хăйсене малашнехи пурнăçра çынлăх тата професси тĕлĕшĕнчен ӳсме шанчăклă никĕс хывакан паха пĕлӳ илеççĕ.

Палăртма кăмăллă: 2013 çулта республикăри 12 шкул Раççейри чи лайăх 500 шкул йышне кĕчĕ, Шупашкар хулинчи 3-мĕш лицей вара çĕр-шыври чи лайăх 25 шкултан пĕри пулса тăчĕ! Республикăн тĕп хулинчи Ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменне «Хушма пĕлӳ паракан чи лайăх учреждени» номинацире «2013 çулхи чи лайăх 100 предприятипе организаци» Пĕтĕм Раççейри конкурсăн топ-листне кĕртнĕ.

Чăваш Енре шкулсен пурлăх никĕсне çирĕплетес, вĕренекенсене паха пĕлӳ парас тата вĕсен хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе тăтăшах ĕçлетпĕр. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне республикăри шкулсенче классемпе спорт залĕсене, медицина кабинечĕсемпе апат пĕçермелли пӳлĕмĕсене, çутăпа, шывпа, ăшăпа тивĕçтерекен тытăмсене тата канализаци сечĕсене юсанă, сĕтел-пуканпа оборудование улăштарнă. Мĕн пур вĕренекене вĕренӳ кĕнекисемпе тӳлевсĕр тивĕçтернĕ. Сывлăх тĕлĕшĕнчен хевтесĕр ачасем валли усă курма меллĕ хутлăх йĕркелемешкĕн вун-вун миллион тенкĕ уйăрнă. Çак ĕçе малалла та тивĕçлĕн туса пырăпăр.

Пирĕн республикăра çамрăксене спорт юхăмне явăçтарасси, вĕсене сывă пурнăç йĕркине йышăнма хăнăхтарасси лайăх пурнăçланать. 2014 çулта «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин «Ача-пăча спорчĕ» проектне пурнăçланă май Чăваш Енри ял шкулĕсенчи 26 спортзала юсаса йĕркене кĕртĕç, оборудовани туянĕç, урамри лапамсенче спорт сооруженийĕсене вырнаçтарĕç.

Пирĕн мăн асаттесем: «Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен», – тенĕ. Кашни çыншăнах çак сăмахсенче – çитĕнӳ тупсăмĕ. Хаклă ачасене, вĕренекенсемпе студентсене, педагогсене тата ашшĕ-амăшне çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче пĕтĕм чунтан çирĕп сывлăх, çĕнĕлĕхсем уçма, пултарулăхра ăнăçу тата лайăх кăмăл сунатăп!

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ.

Уйăх пĕтнĕ чух кивçен памаççĕ.

Каларăш.

кăнтăрла	çĕрле
30.08 + 17	+ 11
31.08 + 17	+ 10
01.09 + 18	+ 9
02.09 + 18	+ 10
03.09 + 18	+ 11
04.09 + 15	+ 10
05.09 + 18	+ 10

Шкулсем вĕренӳ çулне хатĕр

Çитес тунти кунтан çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать. Республикăри вĕренӳ учрежденийĕсене сукмак такăрлатакан 351 пин ачапа çамрăкшăн кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕшĕн те хумхануллă самант вăл. Черетлĕ хут вĕренекенсене йышăнмашкăн шкулсем хатĕр ĕнтĕ, çу каçиччен вĕсене юсанă, çĕнетнĕ.

Çурла уйăхĕ шкул ертӳçисемшĕн уйрăмах хĕрӳ иртет. Çурта йĕркене кĕртесси кăна мар, кадр ыйтăвĕ те пăшăрхантарать вĕсене. Çулсеренех специалистсен 8% çĕнелет: тивĕçлĕ канăва тухакансене çамрăксем ылмаштараççĕ, хĕрсем качча каяççĕ, ача çуратаççĕ… Шкулта кăна мар, пур çĕрте те çаплах, пурнăç пĕр вырăнта тăмасть.

ЧР Вĕренӳ министерствин сайтĕнче çурла уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне районсемпе хуласенчи шкулсенче 230-а яхăн ваканси пуррине пĕлтернĕ. Пĕр уйăхра лару-тăру улшăннă-и? Çак ыйту тавра тĕпчев ирттертĕмĕр.

Акăлчан чĕлхи учителĕ çитмест

Владимир Иванов министр пĕлтернĕ тăрăх – кадрсем тĕлĕшпе лару-тăру пăшăрхантарать, анчах çивĕч теме çук ăна. Авăнăн 1-мĕшĕ тĕлне йăлтах хăй йĕркине кĕрет – лару-тăруран тухма май тупаççех: харăсах темиçе çĕрте ĕçлеме килĕшекенсем тупăнаççĕ, сехетсене улăштараççĕ... «Учитель çитменнипе ачасем предмета вĕренмесĕр юлмĕç», – шантарчĕ Владимир Николаевич.

Хăш предметпа вĕрентекенсем ытларах çитмеççĕ-ха? Малти вырăнта – акăлчан чĕлхи. Авăнăн 25-мĕшĕ тĕлне 25 ваканси пулнă. Вăтамран кашни районта – пĕрер учитель. Унтан вырăс чĕлхипе литератури, истори, кĕçĕн класс учителĕсем, математика, физика... Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн темиçе вырăнĕ пушаннине те асăрхарăм. Тĕслĕхрен, Шупашкарти икĕ шкулта ваканси пулнă, Улатăрта – 3. Хулара кăна мар, районсенче те чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем çитмен. Тĕслĕхрен, Элĕк районĕнчи Йăлкăш, Улатăр районĕнчи Ахматово шкулĕсенче. «Унченхи ĕçтешĕмĕр декрета кайрĕ. Унăн ставкине Чуварлей шкулĕн учительне патăмăр», – ăнлантарчĕ Ахматово шкул директорĕ Татьяна Емельянова.

Тăвай районĕнчи Чутей шкулĕнче те акăлчан чĕлхи, кĕçĕн класс, химипе биологи вĕрентекенĕсен вырăнĕ пушаннине пĕлтернĕ. Николай Большов директор каланă тăрăх – акăлчан чĕлхи вĕрентекенне тупнă. Тутарстанран тăван тăрăха куçса килнĕ Наталья Якимовăна йышăннă. Ытти учитель тупăнман, тивĕçлĕ канурисене ӳкĕтлесе хăварнă. «Хальхи пек учитель шыранине ас тумастăп... Ача сахаллипе сехетсем çитмеççĕ, çавăнпах шалу пысăк мар, педколлективри вăтам ӳсĕм 50 çултан та каçса кайрĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 6 ача вĕренсе тухрĕ, кăçал пĕрремĕш класа та çавăн чухлех килет. Малашне вĕсен йышĕ ӳсессе шанатпăр», – палăртрĕ Николай Васильевич.

Истори, кĕçĕн класс, музыка вĕрентекенĕ кирлине пĕлсен Тăвайри шкулпа та çыхăнтăмăр.

АС ТĂВĂМ



Раççей тата Чăваш халăх артисчĕ, К.Станиславский ячĕллĕ РСФСР патшалăх премийĕн лауреачĕ Виктор Родионов çуралнăранпа 90 çул çитрĕ. Аслă ăру çыннисем унăн сăнарĕсене лайăх ас тăваççĕ. 40 çул хушшинче 300 ытла спектакльте вылянă вăл. Пĕтĕм халăх пĕлекен Тăхтамана, Дзержинские, Иван Яковлева, Никита Бичурина, Муса Джалиле... çав тери ĕнентерӳллĕ кăтартнă.

«Чăваш Левитанĕ»

Виктор Родионова кашни ялта кĕтнĕ. Куракансем унăн пултарулăхĕ çинчен пĕр вĕçĕм калаçнă. Чăваш радио итлекенĕсем ăна сасăранах палланă. Ахальтен мар ун пирки «Чăваш Левитанĕ» тенĕ. Сăмах май, вăл Шупашкар районĕнчи Шемшерте пуп çемйинче çитĕннĕ. Сакăр çултах ашшĕсĕр юлнă. Вырăс çемйинче çитĕннĕскер чăвашла калаçман.

Çамрăка театр студине тӳрех йышăнман, музыка училищине кайма сĕннĕ. Унтан вĕренсе тухсан тин драма театрĕн оркестрне лекнĕ вăл. Ачаллах артист пулма ĕмĕтленекенскерне вăхăт иртнĕçемĕн пĕчĕкрех сăнарсем пама пуçланă. Кайран чăваш артисчĕсемпе пĕрле А.Луначарский ячĕллĕ Мускав патшалăх театр институтĕнче пĕлӳ пухнă. Виктор Родионов хăçан та пулин чăвашла таса калаçма вĕренесси Мускав педагогĕсене те иккĕлентернĕ. Тĕллеве пурнăçа кĕртме ăнтăлни пур йывăрлăха та хыçа хăварма пулăшнă ăна. Чăваш театрĕнче çакнашкал тĕслĕх урăх пулман.

«Эпир малтан «çăлтăр» сăмахпа усă курман. Халĕ шухăшлатăп та, Виктор Родионов чи çутă çăлтăр пулнă. Чи пултаруллă, чи хитре, чи вăйлă артистчĕ вăл. Кулăш нумай пĕлетчĕ. Çакă пире пурне те пурăнма пулăшнă. Студент чухнех хăйĕн сăнарĕсемпе пире тыткăнланă. Тĕлĕнмелле тытатчĕ хăйне сцена çинче. Скалозуб сăнарне мĕнешкел ăста калăпларĕ. Шупашкара килсен те ăна тӳрех тĕп рольсем пама пуçларĕç. Паян трагедире, ыран сатирăра выляма пултаратчĕ вăл.

Пĕрре, сывлăхĕ хавшанă вăхăтра, вахтер патĕнчи пукан çинче ларатчĕ. Иксĕмĕр калаçса кайрăмăр. «Вера, театрсăр ман пурнăç çук», – терĕ.

Виктор Родионов пек артист урăх пулмĕ. Çапах та ыттисен унăн шайне çитме ăнтăлмалла. Пĕрле ĕçлеме тӳр килнишĕн ăна чун-чĕререн тав тăватăп», – сăмах илчĕ унпа пĕрле вĕреннĕ СССР халăх артистки Вера Кузьмина.

«Паллăран та паллă артист пулнă вăл», – аса илĕве тăсрĕ К.В.Иванов ячĕллĕ академи драма театрĕн пултарулăх ертӳçи Валерий Яковлев. Сцена ăсти хĕрне Аленăна, мăшăрне Зоя Ивановнăна çав тери хытă юратнине палăртрĕ. Унăн тĕпренчĕкĕсем, ытти артистсен ачисем пекех, театртах çитĕннĕ. Çавăнпах Елена Викторовнăна аслă ăру артисчĕсем ыталасах илчĕç. «Манăн та атте çулĕпе утас шухăш пурччĕ. «Эсĕ вăтанчăк тата сценăран хăратăн – санран артист пулмасть», – терĕ çывăх çын», – пытармасть унăн ытарайми хĕрĕ.

«Викторпа пĕрле ĕçлеме тӳр килнишĕн мухтанатăп. Вăл сцена çине пĕр утăм тусанах çынсем алă çупма пуçлатчĕç. Унăн интеллигентлăхĕ кирек кама та тĕлĕнтернĕ. Спектакль вăхăтĕнче теменле лару-тăруран та тухма пултаратчĕ. Хамăр сăнар çинчен шухăшламасăр вăл вылянине сăнаттăмăр. Виктор Родионовăн Тăхтаманĕ апат çини мĕне тăратчĕ... Сĕтел çине пĕр тĕпренчĕк те хăварман. Тасалăха, çăкăр çитсе пыманнине кăтартнă çакă.

Пĕррехинче мана, хĕрсене вылянскерне, «Пушар лаши» спектакльте 80-90 çулти кинемей рольне пачĕç. Режиссер тертленсе çитрĕ – сăнар ниепле те пулса çитеймест. Тăхтав вăхăтĕнче Виктор Иосифович айккине чĕнсе кăштах ăнлантарчĕ. Çакăн хыççăн йăлтах çыпăçса кайрĕ.

Йыш хушăнсан мăшăрĕпе иккĕшĕ пирĕн пата килнĕччĕ. Вăл саламлани мĕнешкел пысăк чыс пулнă», – тет Раççей халăх артистки Нина Григорьева.

«Виктор Родионовăн сăнĕпе сăнарĕсем çаплипех манăн куç умĕнче. Ун çинчен сăмахпа каласа çитерме çук, ăна чĕрĕлле курмалла пулнă. Унăн пултарулăхĕ чун-чĕре витĕр тухса ĕмĕрлĕхех йĕр хăварнă. 4-мĕш курсра вĕреннĕ чухне Виктор Иосифович урамра чарăнса сывлăх сунни, калаçни нихăçан та манăçмĕ. Ăна никампа та танлаштарма çук. Вăл – хăй пĕр тĕнче», – аса илет Раççей халăх артистки Нина Яковлева.

Чăваш академи драма театрĕнче Виктор Родионовăн пурнăçĕпе пултарулăхне кăтартакан сăн ӳкерчĕксен куравĕ уçăлнă. Телекурав фондĕнче упранса юлнă спектакльсем урлă унăн сăнарĕсемпе киленме пулать. Çавнашкалах куçарнă фильмсенче нумай артиста чăвашла калаçтарнă вăл. Виктор Иосифович театр ĕçченĕсен пĕрлĕхне 30 çул ытла ертсе пынă. Çав вăхăтра сцена ăстисен çĕр-çĕр ыйтăвне татса панă.

Елена Харькова пурнăçран уйрăлнă артистсене, çав йышра хăйĕн ашшĕне те, асра тытнăшăн, вĕсем çинчен ыттисене каласа кăтартнăшăн театр ĕçченĕсене тав турĕ.

Марина ГРИГОРЬЕВА.
Театр архивĕнчи сăн ӳкерчĕксем.

• ИВАН /В.РОДИОНОВ/, ЯККУ /Н.СТЕПАНОВ/. /«ПУШАР ЛАШИ»/.



• Н.БИЧУРИН /В.РОДИОНОВ/. /«НИКИТА БИЧУРИН»/.

• ДЗЕРЖИНСКИЙ /В.РОДИОНОВ/, ЛЕНИН /Б.АЛЕКСЕЕВ/. /«РЕВОЛЮЦИ ЯЧĔПЕ»/.

ЁÇ ÇЫННИ

Кремль стенине те юсанă

Услă Пукашри Волковсен çемйинче ача-пăча йышлă çитĕннĕ: Таиç, Муза, Туня, Суйкка, Лена, Коля...

Ял ачисемпе пĕрле Таиç Çĕньял Пукаш, Хуракасси шкулĕсене çӳренĕ. Мастерскойра вăл арçын ачасенчен кая мар йывăç каскалама вĕреннĕ. Ашшĕпе пĕрле шăнкăрч вĕлли, пукан та ăсталанă. Çавăнпах, тен, унра строитель пулас туртăм вăраннă.

Таисия Хрисановна Шупашкарти пĕр организацире 36 çул ытла плитка хурас енĕпе ĕçленĕ. Упăшкипе те вăл çавăн чухлех пĕр çăвартан пурăнса ирттернĕ. Мăшăрĕ, Урхас Кушкăра çуралса ӳснĕ Кронид Яковлев, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Ялти кил-çурта тытса тăрасси хĕрарăм хул пуççийĕ çине тиенчĕ. Хулари хваттерĕнче хĕрĕ çемйипе пурăнать. Яла Таиç патне пĕрле вĕреннĕ тусĕсем килсе çӳреççĕ.

Стройкăра ĕçленĕ тапхăрта мĕнле кăна объекта пырса тивмен-ши чăваш хĕрарăмĕн ылтăн алли? Комсомол путевкипе Мускаври строительство ĕçĕсене те хутшăннă, палла çуртсене çĕкленĕ, Кремль стенине те юсанă, Шупашкарти Олимп стадионĕнче те вăй хунă...

Таисия Яковлевăна 1973 çулта «ЧР тава тивĕçлĕ строителĕ» ятпа чысланă. Унччен вăл 3 хутчен «Соцăмăрту çĕнтерӳçи» медале, çавăн пекех «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

...Утать Урхас Кушкăпа 76-ри Таиç. Яков Лаврентьевич «Çăлтăр» колхоза ертсе пынă çулсенче çĕкленĕ фермăсем халĕ юхăнса ларнăшăн пăшăрханать – хуçалăхне чапа кăларассишĕн тăрăшнă-çке хуняшшĕ. Çаплараххĕ ун чухне пурнăç, кашниех – çăкăр ӳстерекенĕ те, çурт купалаканĕ те – малти ретре пуласси шĕн ăнтăлнă, хавхаланса ĕçленĕ.

А.ШОКЛЕВ.
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен «Хыпар» Издательство çурчĕн хаçачĕсене 2015 çулăн I çурри валли республикăри почта уйрăмĕсенче йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ.

«Чăваш хĕрарăмĕ» – 325,08 тенкĕ.

СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам звонить по тел. 8-967-478-06-12, 28-83-64, 56-04-17.

САМАХ ПАРĂР-ХА

Юратма... робот пулăшаймĕ

Маргарита ИЛЬИНА

“Тинех математика енне питпе çаврăнчĕç”, “Малашне математика тĕп вырăнта пулĕ” – вĕрентекенсен çурла уйăхĕнче иртнĕ йăлана кĕнĕ конференцийĕ хыççăн республика МИХĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса тенĕ пек çак шухăша палăртрĕç... Çыракансен çарĕнчен тӳрех ыйтас килсе кайрĕ – калăр-ха, шутлав хăçан тĕп вырăнта пулман вара? Эпир кĕçĕн классенче ăс пухнă чухнех пире çак шухăша ăша хывма хăнăхтарнă – математика логикăна аталантарать, апла тăк – çулран çул кăткăсланса пыракан задачăсене шĕкĕлчеме хăнăхни пурнăçра каярах тĕл пулакан йывăрлăхсене парăнтарма пулăшĕ. Тавах вĕрентекенĕмĕрсене, уйрăмах – кĕçĕн классенче ăс панисене. Чăнах та çаплах пулса тухрĕ. Математика сехечĕсем пурнăç урокĕсене çаврăнчĕç...

Вăл-ку юрĕ-ха, хăшĕ-пĕри задачăсене шĕкĕлченĕпе пĕрлех сăмах вăчăрине те выля-выля кăна явăнтарать. Анчах та, ăсчахсем палăртнă тăрăх, пурне те капла ăсталăх пӳрмен çав. Физикăпа лирикăна пĕр тĕвве çыхма пултаракансене шутласа тухма, тепĕр тесен, ăсчах пулăшăвĕ кирлех те мар. Тăван шкулăн 125 çулхи юбилейĕнче, сăмахран, Элĕк районĕнчи Тавăтри вăтам шкулта пĕр вăхăт физика вĕрентнĕ Станислав Куликов хăй çырнă сăввисене вуланине чăнласах çăвар карса итлерĕм. Тепĕр сăвăç та капла хайлаймасть. Станислав Николаевич физика та ун патĕнче вĕреннĕ ачасем пурнăç тăршшĕпех тав туса пурăнаççĕ – вăл çĕр çине физика вĕрентмех килнĕ тейĕн...

Анчах калас тенĕ сăмахăм математика-физика пирки мар – ку ăслăлăх вĕренӳ программинче паян-ыран мар, яланах тĕп вырăнта пулнă. Юлашки çулсенче, ППЭ тĕрĕслевне пула – пушшех те. Пĕр вăхăт хула шкулĕнче ĕçлеме тӳр килнĕччĕ. Ку вĕренӳ заведенийĕ математика-физика çул-йĕрне суйланăччĕ те, ытти предмет унта – “çын вырăнĕнче” те марччĕ. /Маншăн лайăх кăна пулчĕ-ха ку, унсăрăн лара-аттăм паян та хулара ӳснĕ ачасене “папа” – “атте”, “мама” вара “анне” пулнине аса илтерсе.../ Хама вĕрентнĕ учительсемпе килĕшетĕп – çапла, математика шкулта пысăк вырăн йышăнмаллах. Анчах та – паянхи пек мар. Халĕ пуç тавра çиччĕ çавăрса шухăшлама вĕрентмест шкул – ППЭ лайăх тытма кăна хатĕрлет. Апла тăк – математика пурнăç урокĕ пулма пăрахнă. Вĕренӳре вăтам ĕлкĕрсе пыракан ачасем тест евĕр иртекен экзамена пӳрнепе тĕллесе тытса тухаççĕ шкултан. “Тен, ăнăçать?” меслете шута илсе ăçта кирлĕ унта паллăсем лартнипех “3” илме пулать паян экзаменра. Апла тăк – шкулта 11 çул мĕн тесе пуçа çĕмĕрмелле-ха? Пушшех те, эсĕ физик мар, лирик пулсан...

РФ /!/ Правительстви çумĕнчи финанс академийĕн студенчĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн комисси шалт аптăранине пĕлетĕп – ыран-паян алла диплом илме хатĕрленекен çамрăксен сăмах саппасĕ питĕ чухăн, шухăша та хитре калăплама пĕлмеççĕ. Ăçтан пĕлччĕр? Шкулта тестпа усă курса тĕрĕслеççĕ вĕсен пĕлĕвне. Асăннă аслă шкулта зачет-экзамен йăлтах тест формипе иртет. Раççейĕпех чапа тухнă экономика аслă шкулĕнче те çавах. Мĕн патне çитсе тухăпăр капла?

Çук-çук, тавлашмастăп, этемлĕхĕн малалла аталанмаллах, хальхинчен, тен, хăвăртрах та. Унсăрăн хăрушлăх кăларса тăратакан нумай йывăрлăха парăнтараймăпăр. Кăткăс нумай чире çаплипех сиплеймеççĕ акă тухтăрсем: СПИД, рак... Халĕ тата Эмбола сиксе тухрĕ... Пирĕн хăлхашăн та тахçанах хамăрăн сăмаха çаврăннă нанотехнологие чăнласах алла илсен, тен, вĕсене вуçех пĕтерме пулĕ. Нано пурнăçа юмаха çавăрать. Тен, этемлĕхе вилĕмсĕрлĕх те парнелĕ вăл. Робототехника аталанмаллах. Анчах та... лириксем те кирлех. Этем – робот мар-çке. Унăн чунĕ пур. Чунра мĕн пулса иртнине, хăй мĕн туйнине унăн теприне каласа кăтартас килет. Юрату çинчен те, курайманлăх пирки те. Çакна валли вара... сăмах кирлĕ...

ХУШСА ÇЫРНИ. РФ Президенчĕ В.Путин ятарлă указа алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкултан вĕренсе тухакансем литературăпа сочинени çырĕç. Тинех пăр тапраннине пĕлтерет-ши ку? Кам пĕлет, пурăна-киле, тен, каллех хаçат-журнал, кĕнеке вулакан /тур сыхлатăр, чутах “роботсене” тесе çыраттăм/ нацие çаврăнăпăр?

СПОРТ

Пур енлĕ хăтлăхпа тивĕçтермелле

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикинче 2014 çулхи юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕршывĕ» спорт форумне хатĕрлесе иттерес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет ларăвне ирттернĕ.

Форума Раççейрен тата 20 тĕрлĕ ют çĕр-шывран 3 пин ытла çын хутшăнма хапăл тунине пĕлтернĕ. «Пирĕн тĕллев – мероприятие тивĕçлĕ шайра ирттересси. Спорт лапамĕсемпе объекчĕсене кăна мар, пулăшу паракан тытăма – общество апатланăвĕ, хăна çурчĕ тата ыттине те – пырса тивет ку. Форума килекенсене хăтлă условисем туса памалла, халăх промыслин ăстисен продукцийĕпе тивĕçтермелле, паха шыв тĕлĕшĕпе те чăрмав пулмалла мар», – тенĕ Михаил Игнатьев. Палăртнă тĕллевсене çӳллĕ шайра пурнăçламашкăн бизнес тытăмĕн представителĕсене пĕр-пĕрне пур енлĕн пулăшма сĕннĕ.

ЧР информполитика министрĕ Валентина Андреева мероприятие реклама тата информаци енĕпе тивĕçтересси çинчен каланă. Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар урамĕсене баннерсем, электрон табло, курăмлă ытти реклама хатĕрĕсем вырнаçтарĕç. Хуласене еплерех илемлетме палăртнипе администраци пуçлăхĕсем паллаштарнă.

ЧР экономика министрĕ Владимир Аврелькин пĕлтернĕ тăрăх – форума хутшăнакансем валли 43 хăна çурчĕ хатĕр.

Лиана ВАНИНА.

ТАСА ШЫВ

Республика опычĕпе паллашнă

Çурла уйăхĕн 25-29-мĕшĕсенче Шупашкарта Раççейри «Водоканалсен» VII конференцийĕ ĕçлерĕ. Çакнашкал мероприятие çĕр-шыври çак тытăмра çитĕнӳ тунă хуласенчен пĕринче ирттересси йăлана кĕнĕ.

Конференцие яланхи пекех Таса шывпа тивĕçтерекен тата юхтарса яракан ассоциаци, РФ Патшалăх Думин, Строительствăпа ЖКХ, Экономика аталанăвĕн, Çут çанталăк пурлăхĕсен министерствисен, федерацин тарифсем енĕпе ĕçлекен службин тата Роспотребнадзорăн представителĕсем хутшăннă. Вĕсем çурт-йĕрпе коммуналлă комплекса модернизацилессипе, таса шывпа тивĕçтерессипе çыхăннă ыйтусене тишкернĕ.

200 ытла хăна «Водоканал» обществăна, «Биологи тасатăвĕн сооруженийĕ» предприятие çитсе курнă. Унта çĕнĕ технологисемпе паллашнă.

Правительство çуртĕнче иртнĕ пресс-конференцире РФ строительствăпа ЖКХ министрĕн çумĕ Андрей Чибис, Раççейри таса шывпа тивĕçтерекен тата юхтарса яракан ассоциацийĕн ĕç тăвакан директорĕ Елена Довлатова тата федерацин тарифсем енĕпе ĕçлекен служба ертӳçин çумĕ Сергей Зинченко журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă.

Конференци ĕçне пĕтĕмлетме республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннă. Вăл таса шывпа тивĕçтересси влаç органĕсен тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулнине палăртнă. Çавнашкалах «çавра сĕтелсен» ĕçне хак панă.

Çитес çул çакнашкал форум Карели Республикинче иртĕ.

Марина ГРИГОРЬЕВА.

КУЛЬТУРА

Тирпейлĕх хуçаланать

Асламасри информаципе культура центрне кĕрсе тухасшăнччĕ. Алăка питĕрнĕ. Эх, сехет çине пăхман та – апат вăхăчĕ иккен. Иккĕмĕш ача кĕтекен Светлана Григорьева апатланма киле кайнă терĕç. Ыттисем çава йăтса аслă çул хĕррине тухнă. Тавралăха тирпей-илем кĕртес енĕпе хăйсемех тăрăшаççĕ. Специалистсемшĕн Мăн Чураш ял тăрăхĕн ĕçченĕсемпе пĕрле тем пысăкăш лаптăкри курăка çуласси ним те мар. «Районти канашлусенче культура пĕлтерĕшĕ тавра нумай калаçатпăр. Ахальтен мар йĕри-тавралăха хăтлăлатма сĕнеççĕ пире», – ăнлантараççĕ хĕрарăмсем.

Ку хутĕнче хăйсене нихçанхинчен яваплăрах туйни сисĕнчĕ. Республика Пуçлăхне Михаил Игнатьева кĕтетчĕç кунта. Хăйсен хушшинчи калаçуранах ăнлантăм: хуçисене пахча карти таранчченех юсама хушнă, курăк ашкăрса çитĕнмест, çӳп-çап юхăнса выртмасть. Çакна йăлтах ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Владимир Черлаков пăхса-тĕрĕслесе тăрать.

Хăнасен кăмăлне çавăрма пĕлеççĕ ку тăрăхра. Халăх театрĕ, 4 ансамбль ĕçлет. Аслă ăру çыннисем те, яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç та, ача-пăча та юрра-ташша ăста. Чăваш халăхĕн йăли-йĕркине ăруран ăрăва куçарма тăрăшаççĕ вĕсем. Район шайĕнче палăрнипе çырлахмаççĕ, республика конкурсĕсенче те мала тухаççĕ.

Наталья Яковлева библиотекарь вулавăша чăвашла кĕнекесемпе тивĕçтерменшĕн пăшăрханса каларĕ: кăçал, сăмахран, пĕрре те илмен. Юрать-ха пĕлтĕр кĕнеке фондне пуянлатма ял тăрăхĕ 15 пин тенкĕ уйăрнă. Наталья Юрьевна каланă тăрăх – çулла кĕтӳçсем вулама юратаççĕ. Ачасем те шкул программине кĕнĕ кĕнекесене илсех тăраççĕ.

Мария РОМАНСКАЯ.
Етĕрне районĕ.

АКЦИ

Хамăрăннех туянар

Авăн уйăхĕнчен пуçласа раштав вĕçĕчченех республикăра «Вырăнтине суйла – хамăрăннех туян» акци иртет. Ăна РФ Президенчĕн Владимир Путинăн çĕр-шывра апатçимĕç хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе çыхăннă Указне пурнăçа кĕртес тĕллевпе йĕркелеççĕ. Çак тапхăрта халăх хамăр патăмăрта туса илекен ял хуçалăх таварĕпе апатçимĕçĕ çинчен ытларах пĕлме пултарĕ. Йĕркелӳçĕсем суту-илӳ предприятийĕсенче вырăнти продукци ытларах сутăнасса, ассортимент пуянланасса шанаççĕ.

Акци вăхăтĕнче ял-хула çыннисене тĕрлĕ кăсăклăх кĕтĕ. Сăмахран, апат-çимĕçе ăçта туяннине, мĕншĕн кăмăлланине тĕпчес тĕллевпе ыйтăма хутшăнтарĕç. Шкулсемпе садиксенче те ачасем валли тĕрлĕ мероприяти палăртса хунă. Сăмахран, ял хуçалăх таварĕ туса илекенсем хăйсен ĕçĕпе паллаштарĕç.

Шупашкар, Канаш, Çĕмĕрле, Улатăр хулисенче – çурлан 23-мĕшĕнчен пуçласа, Çĕнĕ Шупашкарта паянтан «Кĕр мăнтăрĕ-2014» ярмăрка ĕçлет.

Анна ГЕРАСИМОВА.

АМĂШĔН КАПИТАЛĔ

Вĕреннĕшĕн тӳлеме

Федераци саккунĕ вăя кĕнĕренпе республикăри 750 çемье пĕлӳ илнĕшĕн амăшĕн капиталĕпе усă курса тӳленĕ. Çакă 28,5 миллион тенкĕпе танлашать. Аса илтеретпĕр, ку укçана çĕр-шыври пур вĕренӳ организацийĕ те йышăнать. Ку çăмăллăхпа 25 çула çитмен ачасем усă курма пултараççĕ. Унсăр пуçне общежитире пурăннăшăн та амăшĕн капиталĕпе тӳлеме пулать. Хальлĕхе çакнашкал 9 ыйтăва пăхса тухнă. Пӳлĕм вăхăтлăха тара илнĕшĕн 90 пин тенкĕ куçарнă.

Сăмах май, 2007 çултанпа 53,8 пин çемье амăшĕн капиталĕн сертификатне илнĕ. Кăçал унăн виçи 429408 тенке çитнĕ.

Марина ТУМАЛАНОВА.

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

Шкулсем вĕренӳ çулне хатĕр

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Елчĕк районĕнчи Александр Волков истори вĕрентме килĕшнĕ кунта. Çак шкултан вĕренсе тухнă, педагогика аслă пĕлĕвĕ илнĕ çамрăк специалист Татьяна Фодорова – кĕçĕн классене. Музыка шкулĕнчи педагогпа та пĕр чĕлхе тупма май килнĕ. Вера Кириллова ертӳçĕ çивĕч лару-тăруран хăтăлнăшăн савăннине пытармарĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хавхаланса пикенмешкĕн шкул Чăваш Ен пуçлăхĕн грантне 200 пин тенке тивĕçни те витĕм кӳнĕ-мĕн.

Çĕрпӳри 2-мĕш шкулта географи, акăлчан чĕлхи, кĕçĕн класс 2 учителĕн ставки пушаннă. Директор çумĕ пĕлтернĕ тăрăх, вĕсем те вĕрентекенсене тупнă – ялти шкулсенчен килеççĕ.

Çамрăксем сахалăн

Уйăх каялла кăна-ха Канаш районĕнче 20 ытла ваканси пулнă. Халĕ кунта лару-тăру епле-ши? Çакна пĕлмешкĕн çула тухрăмăр, район администрацийĕн вĕренӳ управленийĕн пуçлăхĕпе Юрий Алексеевпа тĕл пултăмăр. «Вĕренӳ тытăмĕнче кадрсен улшăнăвĕ çукпа пĕрех. Тивĕçлĕ канăва тухнисем – 19%, çамрăксем – 41%. 2010-2011 çулсенче çĕнĕ 4 специалист ĕçе пикеннĕ, çулсеренех вĕсен шучĕ ӳссе пынă, кăçал 3 çамрăк вырнаçнă: Сиккассинчи А.Миттов ячĕллĕ шкула Александр Тимофеев, Вăтакас Татмăша – Ольга Гаврилова /иккĕшĕ те историпе общество пĕлĕвĕ вĕрентĕç/, Н.Гаврилов герой ячĕллĕ Янкăлч шкулне – Екатерина Миронова /кĕçĕн класс учителĕ/», – паллаштарчĕ ертӳçĕ.

Катек шкулĕнчен физрук Канаша кайнă, Çĕнĕ Чăлкассинче те çак специалистăн сехечĕсем пушаннă. Шаккăлта, Мăкăрта – акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕн, Шăхасанта математика, информатика, педагог-психолог, кĕçĕн класс вĕрентекенĕ кирлĕ пулнă. Ытлари кун районти педагогсемпе иртнĕ канашра та вакансисем пирки пĕлтернĕ. Пĕр шкултан теприне çӳреме килĕшекенсем тупăнасса шантарать Юрий Серафимович.

Çамрăк специалистсене кунта мĕнле хавхалантарнипе те кăсăклантăм. Оклад çумне 50% хушса параççĕ, çурт-йĕр çавăрма май паракан çăмăллăхлă программăсемпе усă курма май пур. Сăмахран, учительсене процент ставкине пĕчĕклетсе кивçен укçа параççĕ. Сиккассинчи çамрăк учителе нумай пулмасть кăна... хваттерпе тивĕçтернĕ. Кăçал çурла уйăхĕнче çемье çавăрнă Александр Тимофеев шăпах унта куçма хатĕрленет-мĕн. Телейлĕ мăшăрпа курнăçма тӳр килчĕ, вĕсем хăйсен çĕнĕ йăвине кăтартма килĕшрĕç.



Ыйту татăлнă

Александр Валерьевич – учитель çемйинчен. Ашшĕпе амăшĕ Вырăскас Пикших шкулĕнче ĕçлеççĕ, иккĕшĕ те – химик-биолог. Ывăлĕ вара историпе общество пĕлĕвĕ урокĕсене килĕштернĕ. Мĕнрен пуçланнă-ха çак туртăм? Акă мĕн каласа кăтартрĕ çамрăк учитель: «5-мĕш класра историпе тĕрĕслев ĕçĕ çырса «2» илтĕм. Зоя Саидовна Кочеткова вĕрентекен ăна тӳрлетме хушрĕ. Çавăн чухне эпĕ историпе кăсăкланса кайрăм. 7-мĕш класранпа çулсеренех республика олимпиадисене хутшăнма тытăнтăм, ялан малти вырăнсене йышăннă. Шкулта ку предметсемпе «4» илсе курман эпĕ, «5» кăна».

Алла атестат илсен учитель профессине илме васкаман вăл, 5 çул менеджера вĕреннĕ. Унтан Канашри банка ĕçе вырнаçнă. Ку вырăн чуна килĕшменнине çулталăка яхăн иртнĕ хыççăн ăнланса илнĕ. Сиккассинче историпе общество пĕлĕвĕн вакансийĕ тупăнсан пурнăçне шкулпа çыхăнтарма тĕв тунă, куçăн мар майпа тӳрех 3-мĕш курса вĕренме кĕнĕ. Александр династие тăсма килĕшнĕшĕн килтисем те савăннă. «Ашшĕ-амăшĕ тăрăх хаклас тăк лайăх специалист пулмалла», – çамрăкăн пултарулăхĕ пирки иккĕленмест шкул директорĕ Марианна Михайлова.

Сиккассинчи пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулпа хирĕçех – икĕ хутлă нумай хваттерлĕ çĕнĕ çурт. Ăна ял тăрăх администрацийĕ тăрăшнипе «Кивĕ çурт-йĕр» программăпа усă курса хута янă. Унччен ку вырăнта йывăç барак ларнă, вăл социаллă çурт-йĕр шутланнă. Сиккассисем çак фонда упраса хăварнă. Ĕçе килекене пурăнмалли кĕтес тӳлевсĕр сĕнни – хальхи вăхăтшăн ĕненмелле мар пулăмпа танах. Акă Марианна Константиновна физикăпа математика учительне шыраса Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ педагогика университетне çитнĕ. «Шалу – 29 пин тенкĕ. Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер паратпăр», – астарнă вăл студентсене. Çамрăксем ун çине шанмасăр тинкернĕ, нихăшĕ те пыма килĕшмен.

Çав çуртра халĕ учительсем, педагогика ветеранĕ, тухтăр çемйисем пурăнаççĕ. Тимофеевсен хваттерĕ – пĕрремĕш хутра. Ламинат урай сарнă, илĕртӳллĕ обой çыпăçтарнă хваттере киленсе пăхрăмăр. Машăпа Саша ăна хăтлăлатас тĕлĕшпе ăшталанаççĕ кăна. Вĕр çĕнĕ сĕтел-пукан пӳлĕмсене илем кӳрет. Кил ăшшин управçи Мария Николаевна – Тăвай районĕнчи Энĕшпуçĕнчен, Хусанти аслă шкулăн 5-мĕш курсĕнче пĕлӳ пухать, çитес çул ветеринар дипломне илĕ.

Александр Валерьевича 6-мĕш класс ертӳçи пулма шаннă. Вĕсемпе тĕл пуласса чăтăмсăр кĕтет, ачасемпе пĕр чĕлхе тупасси иккĕлентермест ăна.

Марианна Михайлова директор шкула çамрăк специалист килнĕшĕн хĕпĕртенине пытармасть. Коллективри 12 учительтен пиллĕккĕшĕ – тивĕçлĕ канăва тухнисем. 70-тен иртнĕ физика вĕрентекенне çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче Сергей Ерицов улăштарĕ. Çапла кунта кадрсен ыйтăвĕ татăлнă.

Хуларинчен кая мар

Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăш шкулĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ реконструкци ĕçĕсем хĕрӳ иртеççĕ. Юсава çурлан юлашки кунĕсем тĕлне вĕçлеме палăртнă, çавăнпа та кунта учительсене пулăшма ашшĕ-амăшĕ, ял тăрăхĕн спецалисчĕсем те тухнă.

Пĕлтĕр шкул стенине сӳтсе çĕнĕрен купаланă, никĕсне те çирĕплетнĕ. Унтан çурт тăррине улăштарнă, маччине ăшă тытмалла тунă. Шкула валли дизель генераторĕ туяннă. Канализаци, картишĕнчи çутă юписене, пур чӳречене те, урамран кĕмелли алăка улăштарнă, урама асфальт сарнă... Пĕлтĕр 24 миллион тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă кунта. Кăçал та сахал мар укçа уйăрнă. Кашни класри стенана çĕнĕрен штукатурка витнĕ, сăрланă. Хăма урайне линолеумпа улăштарнă. Акт, спорт залĕсенче, коридорсенче, столовăйра та – çĕнетӳ. Кашни класа шыв кĕртнĕ, спортзалта душ та пулĕ. Авăнăн 1-мĕшĕнче килекен ачасем тăван шкулне палласа та илеймĕç. Улшăну – кашни утăмрах.

«Хуларинчен те чаплăрах кунта. Учительсем кунĕнçĕрĕн ĕçлеççĕ, строительсенчен кая мар опыт пухрĕç. Эпир те икĕ кун пулăшма килтĕмĕр. Коридор урайне сăрларăмăр, классенче парта вырнаçтартăмăр. Манăн ачасем кăçал 1 тата 5-мĕш классене вĕренме килеççĕ, каникул вĕçленессе чăтăмсăр кĕтеççĕ. Ял шкулне çавнашкал пысăк укçа уйăрни питĕ савăнтарать. Пирĕн ачасене те шута хураççĕ, лайăх условисем туса параççĕ», – палăртать 3-мĕш хутра урай сăрлакан амăшĕ Елена Васильева.

Кăçал Вăтакас Татмăша 100 ача пĕлӳ сукмакне такăрлатĕ, вăл шутра Украинăран тарса килнĕ икĕ вĕренекен çӳрĕ. Çемьесем çак ялтах тăванĕсем патĕнче тĕпленнĕ. Ставропольтен куçса килнĕ Ольга Трапчук кунта ĕçе вырнаçнă, вăл физикăпа математика вĕрентĕ. Ольга Гаврилова çамрăк специалист пирки çӳлерех асăнтăмăр ĕнтĕ. Чакаç пики вырăс филологи факультетне пĕтернĕ. Халĕ предмет специальноçне улăштарасшăн, куçăн мар майпа иккĕмĕш аслă пĕлӳ илет. Шкулта ӳкерӳ тата музыка учителĕ тĕлĕшпе йывăрлăх сиксе тухнă. Ӳкерес туртăмĕ лайăх аталаннă кĕçĕн класс вĕрентекенне ИЗО урокĕсене /3 сехет/ панă. Юрлама вара директор çумĕ Надежда Кондратьева вĕрентĕ. Ятарлă пĕлӳ илнĕ специалист тупăнмасан çакнашкал май тупма та тивет иккен. Чи кирли – ачасем вĕренӳ программинчен ан юлччăр. Кун пек чухне уроксен пахалăхĕ мĕнлерех? Кун пирки тепĕр чух калаçăпăр.

Професси ят-сумĕ ӳсет

Аслă шкулсем специалистсем çителĕклĕ хатĕрлеççĕ-и? Владимир Иванов министрпа ку ыйту тавра та калаçма тӳр килчĕ. И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ рейтингĕ юлашки çулсенче чылай ӳснине, ытти аслă шкул хушшинче тивĕçлĕ вырăн йышăннине палăртрĕ вăл. Вĕренме кĕрес текенсен йышĕ пысăкланнă, конкурс вăйланнă. Бюджет вырăнĕсене 1000 яхăн студента йышăнать университет. Технологи специальноçĕсене хатĕрлекен факультетсенче кăна 7-8 вырăна абитуриентсене балл пĕчĕккипе илсе çитереймен-мĕн. «Учитель – хисеплĕ професси, унăн ят-сумне çĕклессипе ӳлĕмрен те тăрăшăпăр», – терĕ Владимир Николаевич.

Çамрăк специалист шкула ура ярса пусмашкăн мĕншĕн шикленет-ха? Ачасенчен хăрани, яваплăх, шалу тивĕçтерменни... Сăлтавĕ кашнин тĕрлĕрен. Чун туртăмĕ ачасем патне йыхравласан кăна нимĕнле чăрмав та хăратмĕ, ĕç хавхалану кӳрĕ.

Алина ИЗМАН.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

ЭПИР ÇЫРНĂ ÇЧЧĔ

Çул урлă каçакансене... çу хыптарасшăн



• ÇУЛ, МАШИНĂСЕМ, ÇУРАН ÇӲРЕКЕНСЕМ – ЙĂЛТ ПĂТРАШĂНЧĔ ИРТНĔ ЫТЛАРИ КУН...

Эрне яланхи пекех пуçланчĕ темелле: планерка, çĕнĕ номере палăртни... Пуç çĕклемесĕр ĕçе пикеннĕччĕ кăна, шухăш çăмхине машина сасси татрĕ. Пичет çурчĕ çул хĕрринчех вырнаçнă та, шăв-шава хăнăхнă ĕнтĕ. Е туй кортежĕ çаврăм хыççăн çаврăм хăварнă май хулипех кĕрлеттерет, е реклама роликĕ çавăрттаракан машина урама кисретет. Е тата ытти... Шухăша малалла хăваласа пӳрнесемпе клавиатурăна тăклаттаратăп. Анчах татах татăлать шухăш çиппи, унтан татах та татах... Мĕн амакĕ? Мĕн пĕр чарăнми пиклеттереççĕ машинăсем урамра паян? Тепĕр тесен, правилăсемпе килĕшӳллĕн ял-хулара хăрушлăха сирмешкĕн кăна кăшкăртма юрать вĕт. Темĕн те пĕлес килни пуçа çĕклесе пăхмах хистет. Ак япала! Çынсем машина кустăрми айнех чăмаççĕ тейĕн! Мĕн пулса иртет Иван Яковлев проспектĕнче?

Каярахпа лару-тăру уçăмланчĕ. "Пичет çурчĕ" общество чарăнăвĕ тĕлĕнчи светофора илнĕ хыççăн çул урлă каçмалли вырăн хăварнăччĕ. Çакăнта çине-çинех инкек сиксе тухнине кура – "ЧХ" кун пирки çырнăччĕ – каçса сарса анлăлатрĕç, ятарлă паллăсем çакрĕç, йăрăм-йăрăм йĕр те ӳкерме ӳркенмерĕç. "Çӳлтисем", чăн та, асăрхаттарма та манмарĕç: ку – вăхăтлăх кăна, кĕçех кунти çул урлă каçмалли вырăна вуçех те хупăпăр. Акă çак вăхăт çитнĕ иккен. Çак вырăнтан "зебра" тăрăх каçма хăнăхнисене иртнĕ ытлари кун... карта кĕтсе илчĕ. Ирхине ĕçе кайма хăнăхнă вăхăтра тухнисем карта тĕлне çитсен аптраса ӳкрĕç – малалла çул çук. Анчах та палăртнă çĕре çитмеллех-çке. Ĕçе – пушшех те. Çапла пĕрисем сулахаялла, теприсем сылтăмалла пăрăнчĕç – чукун çул тата суту-илӳ центрĕ еннелле. Çакăнпа ĕç вĕçленчĕ тесе шухăшлатăр тăк – питех те йăнăшатăр. Иккĕ хыççăн виççĕ те, тăваттă та пур. Виççĕмĕш ушкăн нумай шухăшласа тăмарĕ – карта урлă яшт! сиксе каçрĕ те малалла утрĕ. Тăваттăмĕшсем те "тавра каян çу хыпнă" тенине маннă ахăр – карта хĕррипе утса машинăсем ĕрĕхекен вырăна çитрĕç те çул урлă каçма юраман вырăнтанах шаплаттарчĕç. Акă мĕншĕн пĕр чарăнми пиклеттереççĕ иккен машинăсем!

Лару-тăрăва уçăмлатас кăна мар, çивĕч çак ыйтăва татса парас тĕллевпе республика МИХĕсем, çав йышра пирĕн хаçат та, тахçанах чан çапаççĕ. Çак вырăнти ятарлă каçă пĕлтерĕшне пӳрне хуçсах палăртаççĕ. Çынсене сулахаялла та сылтăмалла хăвалани ырăпа вĕçленмесси паллă. Пĕрремĕшĕнчен, çынсем тӳррĕн çӳреме хăнăхнă – капла вăхăт перекетленет. Тавра çаврăнма питех те мелсĕр – хăнăхнинчен сахалтан та çур сехет ытларах иртет. Унтан ытла – пĕчĕк ачаллисен епле утмалла пепкене çĕклесе? Хĕвеллĕ çанталăкра юрĕ тейĕпĕр-ха, сивĕре вара? Е çумăр айĕнче? Е тата – чирлисен? Больницăна кайма тухсан çур сехет танкăшма тивет. /Калăпăр, урам урлă тӳррĕн каçмалли вырăн пур чух тавра çаврăнса тата çур сехет утса пăхăр-ха – мĕн тути калать?/. Ваттисен тата? Пичет çурчĕн столовăйне çӳреме хăнăхнисем кунта яланах аслă çултисем ятарласа апат çиме килнине курма хăнăхнă ĕнтĕ. Хайхи çула хупласан вĕсенчен пĕри питĕ пăшăрханса калаçрĕ – капла столовăйне епле кăштăртатса çитмелле?

Ыйтăва водительсем майлă татса пани куç кĕрет – светофора илнĕ тата каççа хупнă хыççăн ĕнтĕ вĕсем кунтан шăхăрса кăна çӳреме пуçлĕç. Чăнах та, ытлари кун форумсем руль умĕнчисен савăнăçĕпе тулнăччĕ. Анчах та вĕсем васкаса хĕпĕртенĕ-мĕн. Юн кун ĕçе килнĕ май куçа тӳрех тăрăнчĕ – çул урлă каçмалли вырăна пӳлнĕ картана... сӳтнĕ. Шанчăклă çăл куçсем систернĕ тăрăх, "аялтисем" шавлани прокуратура таранах çитнĕ иккен. Анчах та çуран çӳрекенсен те çĕнтерĕве паллă тума иртерех. ЧР ÇÇХПИ ертӳçи В.Романов "Хыпара" хуравланинчен çакă паллă – картан пĕр пайне каллех... вăхăтлăха кăна сӳтнĕ. Суту-илӳ центрĕ тĕлĕнчи çĕр айĕнчи каççа хута ярсан журналистсен, ку пурнăçланса пырать. Унпа килĕшӳллĕн, Иван Яковлев проспектĕнче Пичет çурчĕ тĕлĕнче каçă пăхса хăварманнине калаççĕ. Эпĕ Станиславский мар – документне куçпа курман пулин те ĕненмех тивет. Анчах эпĕ журналист – ыйту пама хăнăхнă: çын хатĕрленĕ проекта çын улшăну кĕртме пултараймасть-и вара? Пичет çурчĕ таврашĕнче те çынсемех пурăнаççĕ. Çуран çӳрекенсемшĕн те, водительсемшĕн те чи меллĕ вариант – сывлăшри кĕпер хывасси. Пĕрремĕшсен пурнăçĕшĕн хăрушсăр ку, иккĕмĕшсем вара хăвăртлăха чакармасăр чупма пултараççĕ – çула шăпах çак тĕллевпе анлăлатрĕç мар-и вара? Ку вариант виççĕмĕшпе тăваттăмĕш ушкăна пăрахăçлама та пулăшать. Çапла, çакна валли укçа кирлĕ. Анчах та ку – татса парайми ыйтусен йышĕнчен мар. Хула влаçĕ пуçне кăштах ыраттарсан çапах та халăха çырлахтаракан йышăну çураласса шанас килет. Тепĕр тесен, асăннă проекта – çуран çӳрекен, водитель тата влаç хушшинче вăрçă çуратаканскерне – йышăнма мехел çитернĕ-çке...

Рита АРТИ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ХАСТАРРИСЕМ

Укçа-тенкĕ ура айĕнчех

Пирĕн пурнăç пыл та çу: эпир укçа çинче утса çӳретпĕр. Ан ӳркен, пĕшкĕн те ил кăна ăна. Çак чăнлăхпа килĕшес килмест-и? Апла тăк сире черетлĕ çул çӳреве йыхравлатăп.

Етĕрне районĕнчи Уйкас Асламасри Юлия Кузьмина ахаль ларма хăнăхман. Сывлăм типсенех хире, вăрмана, çырма-çатра таврашне эмел курăкĕ пуçтарма васкать вăл. Мăнукне те хăйĕнчен хăвармасть. Ăна пĕчĕклех ĕçе явăçтарать. Кăçал иккĕшĕ 330 килограма яхăн эмел курăкĕ типĕтсе панă. Çавна май 30 пин тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ. Хура кĕркуннеччен тата çавăн чухлĕ тупăш илме палăртаççĕ вĕсем.

Ăмсанмалла çеç

«Вĕсем эрнере икĕ-виçĕ хутчен юнашар ялтан урапа тĕксе килеççĕ», – каласа кăтартать Лешкас Асламасри Алина Алексеева. Эмел курăкĕ йышăнакан агент çийĕнчех укçа тыттарни те хавхаланса ĕçлеме хистет. Унсăрăн ялта ăçта шалу илĕн? Ĕç вырăнĕсене кĕскетсе пыраççĕ. «Халĕ ял çыннисенчен чылайăшĕ Мускав, Чул хула тăрăхне тухса каять. Çавăнпах эмел курăкĕ пуçтаракан сахал», – тет Алина Васильевна. 15 çул тăрăшать хĕрарăм çак ĕçре. Малтан 14 агент вăй хунă ку тытăмра. Кайран йыш пĕчĕкленсе пынă. Халĕ районĕпе штатра пĕччен юлнă вăл. Çавăнпах çакăнти лару-тăрăва никамран лайăх пĕлсе тăрать. Машинăпа пĕр ялтан теприне самантрах вĕçтерсе çитет вăл.

Алина Васильевнăна эмел курăкĕ чи нумай пуçтаракан тăрăха палăртма ыйтрăм. Урпашсем хастар ĕçлеççĕ-мĕн. Галина Вандюшкинăна, Мария Дриневскаяна, Галина Тимофеевăна, сăмахран, кашни каймассерен 10-шар пин тенкĕ парса хăварать агент. Тивĕçлĕ канурисене ăмсанмалли çеç юлать. Çапах ыттисем те вĕсенчен юласшăн мар. Янăмри Галина Ефимова та – ял халăхĕшĕн тĕслĕх.

«Малтан шкул ачисемпе эмел курăкĕ пуçтарма тухаттăмăр. Хамăр тăрăхрах типĕтмелли ятарлă çуртсем пурччĕ. Лайăх ĕçлекенсене укçан хавхалантараттăмăр», – аса илет Алина Васильевна. Унтанпа пурнăç улшăннă, халĕ унашкал вырăн тытса тăма тăкаклă теççĕ, çавăнпах типĕтнине кăна йышăнаççĕ.

Пĕчĕк пулăшуçă

Кунĕпе таçта та çитет тăххăрти Катя. Тахăш самантра ял хĕрринче сурăх кĕтĕвĕ пăхакан кукашшĕ патне чупнă вăл. Ахальтен мар пĕчĕк пулăшуçа Анатолий Зиновьевичпа Юлия Александровна çав тери хытă юратаççĕ. Вăр-варлăхпа çаврăнăçулăх пурнăçра ăна хăйĕн вырăнне тупма пулăшасса шанаççĕ. Сăмах май, Кузьминсен килĕнче – 40 сурăх. Выльăх пăхни те çемье бюджетне пысăклатма пулăшать вĕсене. Пирĕн хушăра сурăх шӳрпи е шашлăкĕ юратакан сахал-и?

«Ĕне тытас килет те, анчах сусăрланнине пула ăна сума йывăр», – пăшăрханса калаçать семье ăшшине упраканскер. Çапах сĕтсĕр мар ку килте – арăмĕпе упăшки качака усраççĕ.

Шкула тахçанах хатĕр

Юлия Кузьмина хăй вăхăтĕнче фермăра вăй хунă. Анчах вăкăр хытах тĕксе унăн сывлăхне хавшатнă. Темиçе хутчен операци сĕтелĕ çине выртнă вăл.

«Укçа, чăн та, чул хушшинче. Эмел курăкĕ пуçтарма çăмăл тетĕр-и? Хăш чухне пилĕк те ывăнать, алă та хытать», – чунне уçать Юлия Александровна. Пур пĕрех йывăрлăх хăратмасть ăна.

2006 çулта кăшт кӳренençи те пулнă хĕрарăм. Ун чухне преми илмешкĕн 2 килограмм эмел курăкĕ пуçтарса çитереймен вăл. Халĕ Етĕрне райповĕ мăнукне çуллахи каникула усăллă ирттернĕшĕн вĕренӳçулĕ пуçламăшĕнчи линейкăра парнепе хавхалантарасса шанать. Катя та çак куна чăтăмсăр кĕтет.

Эмел курăкĕ пуçтарса туяннă укçапа Юлия Александровна Катьăна шкула хатĕрленĕ. 3 пин те 500 тенкĕлĕх çи-пуçа хĕр ача кунне темиçе хут тăхăнса пăхма хатĕр. Улăштарса тăхăнмалли кĕписем те пахалăхлă. Пушмакĕ те – хăй килĕштерекенни. Унăн сăн-пичĕ хаваслă кулăпа çиçет.

Малашне Кузьминсем эрнесерен алла кĕрекен укçапа килте юсав ĕçĕсем пуçласшăн.

Марина ТУМАЛАНОВА.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА авăн, 1-7

1 тунти кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.45, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.05 «Добрый день»
15.15 Т/с «ПОЗДНЕЕ РАСКАЯНИЕ» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.45 Т/с «УЧИТЕЛЯ» 16+
23.40 «Первая Мировая» 12+
1.00 «Городские пижоны» «Форс-мажоры» 16+
1.50, 3.05 Х/ф «ВЫДУМАННАЯ ЖИЗНЬ ЭББОТОВ» 16+
3.55 «В наше время» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.00 «Последняя командировка. Памяти Виктора Ногина и Геннадия Куринного» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.45, 19.35 Местное время
11.50, 14.50, 18.05 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «УЗНАЙ МЕНЯ, ЕСЛИ СМОЖЕШЬ» 12+
0.35 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
1.40 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
4.00 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.45-18.05 Вести-Чăваш ен
19.35-20.00 Вести-Чувашия

Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.00 Новости культуры
10.20 Х/ф «АНДРЕЙ РУБЛЕВ»
13.25 Д/ф «Иван Лапиков. Баллада об актере...»
14.05 Д/ф «Вавилонская башня. Земля честных людей»
15.10 Д/ф «Гениальный шалопай. Федор Васильев»
15.50 «Больше, чем любовь»
16.30 Д/ф «Библиотека Петра: слово и дело»
17.00 Шедевры русской музыки. Василий Ладюк и БСО им. П.И. Чайковского. Дирижер Владимир Федосеев
17.40 Д/ф «Путь к человеку»
18.15 Д/с «Ищу учителя»
19.15 «Сати. Нескучная классика...»
20.00 «Правила жизни»
20.30 «Спокойной ночи, малыши!»
20.40 «Тем временем»
21.25 Д/с «На разломе эпох»
22.00 Д/ф «Блеск и слава Древнего Рима»
22.50 Д/ф «Эдгар Дега»
23.20 «Русский Гамлет»
0.05 Д/ф «Георг Шолти. Создать Маэстро»
1.40 Д/ф «Радиоволна»
2.35 Оркестровые миниатюры XX века

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «До суда» 16+
9.05, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.30, 14.30, 17.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.55 «Прокурорская проверка» 16+
16.30 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Т/с «БРАТ ЗА БРАТА» 16+
22.00 «Анатомия дня»
23.00 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
0.55 Т/с «ГЛУХАРЬ. ВОЗВРАЩЕНИЕ» 16+
2.00 «ДНК» 16+
2.55 Дикий мир
3.10 Т/с «ГРЯЗНАЯ РАБОТА» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.15 Х/ф «ДОЖИВЕМ ДО ПОНЕДЕЛЬНИКА»
10.20, 21.45 Петровка, 38 16+
10.35, 11.50 Х/ф «СЧАСТЬЕ ПО КОНТРАКТУ» 16+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
12.55 «В центре событий» 18+
13.55 «Простые сложности» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
16.00, 17.50 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «ПАНДОРА» 16+
22.35 «Беслан. Трагедия страны» 16+
23.05 Без обмана. «Спасите наши суши!» 16+
0.00 События. 25-й час
0.35 «Футбольный центр»
1.05 «Мозговой штурм. Рывок в будущее» 12+
1.45 Х/ф «ВЕРА» 16+
3.35 Х/ф «СМЕРТНЫЙ ВРАГ» 12+
5.10 Д/ф «Бесплодие: расплата за нелюбовь» 12+

РЕН

5.00 «СЛЕДАКИ» 16+
6.00, 13.00 Званый ужин 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 22.30, 4.40 «Смотреть всем!» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 Д/ф «Битва двух океанов» 16+
14.00 «Засуди меня» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 «Свободное время» 16+
20.30, 0.30 Х/ф «ЧАС ПИК» 16+
23.30 «Мои прекрасные...» 16+
2.30 Х/ф «ПЛОТЬ И КРОВЬ» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

18.30 «Республика» хыпарсен кăларăмĕ
18.45 «Ылтăн çӳпçерен» /0+/
19.00 «Яш чух, çамрăк чух» /12+/
19.30 "Республика" информационная программа
19.45 "По существу" /12+/
20.00 "Акилбупсер" /6+/
20.15 "Векторная модель развития образования" /0+/
20.30 «Бумеранг» /12+/
21.00 "Республика" хыпарсен кăларăмĕ
21.30 "Республика" информационная программа
21.45 "По существу" /12+/

Чăваш Наци радиовĕ

8. Чиене, грушăна, пан улмине, шăлана çуркунне лартсан лайăхрах.

9. Йывăç вуллисене кăмпа чирĕ ермен пулсан вĕсене тата туратсене шыв эмульсийĕллĕ сăрăпа витме юрать. Ăна кĕрхи çумăр та çуса яраймĕ, сăрă çуркуннехи хĕвел пĕçертесрен те аван сыхлĕ. Вулăсене полипропилен пусмапа /сахăр миххи чухах/ чĕркемелле. Çуркунне, юр ирĕлсе кайнă хыççăн, пурăпа сăрланинчен усси сахал. Унччен йывăç пиçсе кайса хăрма та пултарать.

Витамин çăл куçĕ

Пахча çимĕç – пахаран та паха апат. Организма йĕркеллĕ ĕçлемешкĕн унта углевод, витамин, минерал тăварĕ, фитонцид, эфир çăвĕсем, чĕлкĕм çителĕклĕ. Фотосинтез пынă чухне ӳсен-тăран хĕвел вăйне нумай илет, кайран çавна çынна парнелет тесен те йăнăш мар.

Пахча çимĕçре сиплĕ япала нумаййине халăх тата ăслăлăх медицини те çирĕплетет. РФ АМН апат-çимĕç институчĕн кăтартăвĕсем тăрăх – этеме кунне 80-100 грамм белок, 400-500 грамм углевод, органика йӳçекĕ – 2-3 миллиграмм, минерал япаласем – 0,1 миллиграммран пуçласа /йод/ 6000 миллиграмм /кали/ таранччен, витаминсем – 0,2 миллиграммран /фоли йӳçекĕ/ пуçласа 100 миллиграмм /аскорбин йӳçекĕ – С витамин/ кирлĕ.

Мĕн чухлĕ пахча çимĕç çимелле-ха? Кунне 400 грамран кая мар. Ăсчахсем çирĕплетнĕ тăрăх – çулталăкри норма: 126 килограмран пуçласа 164 килограма çити. Вăл шутра: тĕрлĕ купăста – 35-55, хăяр – 10-13, томат – 25-32, сухан – 7-10, кишĕр – 6-10, хĕрлĕ кăшман – 5-10, баклажан – 2-5, пылак пăрăç – 3-6, симĕс пăрça е шалча пăрçи – 3-8, бахча йышши çимĕç – 2-30 тата ыттисем – 3-7.

Паллах, талăкри рациона çулталăк вăхăтне, этемĕн ӳсĕмне, мĕнле ĕçре тăрăшнине, климат условийĕсене кура палăртаççĕ.

Чĕрĕ пахча çимĕçре – 65-96% шыв, типĕтнинче – 4-35%. Ӳсен-тăрана хăйне те шыв нумай кирлĕ. Вăл ăна сĕтеклĕх парать, органика япалисене ирĕлтерме пулăшать. Çавна май çимĕçри сахăра, йӳçексене, азотпа минерал япаласене организм лайăх йышăнать. Сĕтеклĕхе пула калори шайĕ те пĕчĕк.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

Упăшка умĕнчех арçынсем илсе килетĕп

Çитет капла пурăнса! Чăтăм пĕтрĕ. Килте арçын ĕçĕсене пурнăçламашкăн упăшкана шаннăччĕ халĕччен. Унăн алли «çыпăçманран» йăлтах арканма тытăнчĕ вĕт. Сĕтел-пукан чалăшрĕ, кантăкĕ тухса ӳкесрен чӳрече те уçма хăратăп... Кашни кун пĕр пăта çапмасан хуçалăх юхăнать тени тĕрĕсех çав. Хваттерте те арçын валли ĕç тупăнсах тăрать. Вĕсене вăхăтра пурнăçламалла-ха та... Анчах манăн арçын нимĕн те курмасть тейĕн. «Çĕмĕрме кăна пĕлетĕр, сăтăрçăсем!» – пĕр-пĕр ĕç хушсан тарăхать кăна вăл. Япала ĕмĕр пырать тет-ши? Арçынпа пурăнакан хĕрарăм-çке эпĕ, юхăнчăк пурăннăшăн тăвансем, юлташсем умĕнче мана мар, ăна намăс пулмалла. Çын мĕн шухăшлани – тарама, хамăра хăтлă мар-çке капла.

Упăшка хăнк! та туманнине кура йăлтах хам алла илме тĕв турăм. Укçа пухса пынăччĕ те унăн куçĕнчен пăхмарăм. Ĕçе чӳречепе алăкран тытăнтăм. Ку тĕлĕшпе пулăшакансем халĕ темĕн чухлех. Пĕлтерӳри пĕр номерпе шăнкăравларăм. Каçкӳлĕм киле Вова ятлăскерпе пырса кĕтĕмĕр. Ют арçынпа килнине курсан упăшкам нимĕн ăнланмасăр пирĕн çине пăхкаларĕ. Мăшăра асăрхаттарманччĕ эпĕ: ăна çилленнĕччĕ те виçĕ кун калаçманччĕ. Вова чӳрече, алăк виçме тытăнсан тин кама ертсе килнине тавçăрчĕ упăшка.

Çĕнĕ шкап, ытти сĕтел пукан та саккас парсах тутарма шухăшларăм. Ку енĕпе тĕшмĕртекен ăстана чĕнсе илтĕм. Хальхинче киле Сашăпа пырса кĕтĕмĕр. Упăшка каллех ман çине шанмасăр пăхать. Ăна нимĕн те ăнлантармасăрах Сашăна çывăрмалли пӳлĕме илсе кайрăм. Вăл стена виçме тытăнчĕ...

Туалетпа ваннăйра та пăрăхсем кивелнĕ, шыв тумласа тарăхтарать. Сантехник Кольăн номерне пĕлĕшĕм пачĕ, вăл та манпа пыма килĕшрĕ.

Юрать-ха упăшка кĕвĕç мар. Унсăрăн манăн хавхаланăва лап! сӳнтерсе лартатчĕ. «Хăтланах», – тет кăна вăл, хăй вара илемлĕ шкапшăн та, çĕнĕ алăкпа чӳречешĕн те савăнать, укçа та хушма хирĕç мар.

Темĕн тĕрлĕ ăста та тупма пулать иккен халĕ. «Пĕр сехетлĕх арçын» хуçалăхра пулăшма хатĕр: чӳрече карри çакать, кран улăштарать, плитка çыпăçтарать... Паллах – укçалла. Ку пирĕншĕн питĕ меллĕ, арçын шыраса утмалла мар. «Çумри вара мĕн тума кирлĕ?» – тетĕр-и? Ашшĕ-çке вăл, ăна ачисем юратаççĕ. Çакăншăн çемьене упраса хăвармаллах. Арçын пуртă-мăлатукпа ĕçлеме пĕлменнишĕнех уйрăлса каймалла-и? Пурин те платник, строитель пултарулăхĕ çук çав. Манăн арçынна та ку тĕлĕшпе, ну, ăнман тăк – мĕн тăвас-ха? Тепĕр тесен, эпир те, хĕрарăмсем, кашниех ал ĕçĕпе аппаланмастпăр. Сăмахран, эпĕ çĕвĕ машинки умĕнче нихăçан та ларман. Япаласене ателье кайса паратăп. Тĕрлеме те кăмăллamастăп. Алса-нуски те анне çыхса парать.

Ĕç пайласа мăшăрпа вăрçăниччен специалистсене шанни лайăхрах – çакнашкал пĕтĕмлетӳ турăмăр эпир. Кăлтăксăр çын çĕр çинче çук. Упăшкара начаррине мар, лайăх енне асăрхатăп. Тĕслĕхрен, вăл компьютер юсас енĕпе маçтăр. Ĕçсе çапкаланса çӳремест, ĕç хыççăн тӳрех садике чупать. Эпĕ каярах юлса килсен апат та пĕçерет.

Халĕ кран ванса каясран та, сĕтел-пукан çĕмĕрĕлесрен та шикленместĕп. «Пĕр сехетлĕх арçынсем» наччасрах юсаса параççĕ. Анчах вĕсене ертсе килес умĕн упăшкана асăрхаттарма манмастăп. Çумри арçын – чун валли, ĕмĕр ирттермелли. Çакна яланах асра тытатăп.

Алина ИÇĔМПИ.

ЮРАТУ ÇИНЧЕН – САВĂЛАСА

Микул ПУЛАР

Те хĕвел, те уйăх, те телей, те хуйăх...



* * *

Эсĕ тата эпĕ...
Çыхăнтăмăр тепĕр,
Пĕр тĕвĕпе –
Тĕллевпе!

Эсĕ тата эпĕ...
Мĕн тата кĕтетпĕр?
Çак тĕнчери
Пăрнăçра.

Эсĕ тата эпĕ...
Асамат кĕперĕ,
Йăл! йăлкăшать –
Йăмăхать.

Эсĕ тата эпĕ...
Пурăнăç тĕревĕ!
Ун никĕсне
Çук хĕсме.

Эсĕ тата эпĕ...
– Савни илт-ха! –
тетĕп, –
Пĕр санпала
Пулмалла...

Эсĕ тата эпĕ...
Мĕн кирлех-ши тепĕр?

* * *

Те хĕвел, те уйăх,
Ман çине пăхатăн,
Те телей, те хуйăх
Эс мана паратăн...

Пĕлме çук çанталăк:
Шăрăх, шартлама...
Иртрĕ виçĕ талăк,
Калаçман сăмах...

Юрату сăмсахĕ,
Халь кунта кичем.
Чун савни сăмахĕ
Таврăнать пирчен...

* * *

Алри черчен чечек чĕтретчĕ
Санпа паллашнă вăхăтра.
Тĕнче илемлĕ те кĕтретчĕ,
Шăпа хистенĕн: «Хăвăртрах...»

Анчах та сывăхри инçет-мĕн,
Ун чух çакна шухăшламан.
Уйрăлура чĕре писет-мĕн
Пĕрне-пĕри манса кайсан.

Сан сăмаху асрах-ха халь те:
– Эс маншăн –
пурнăçри чечек!
Халь кирлĕ мар мана
ахаль те,
Ыйтсан та каçару тем пек...

Çав саманта аса илетĕп:
Таять пуçне кăвак сирень.
Тăкăрлăка çитсе килетĕп,
Сив çил кăна вĕрет питрен...

ТЕСТ

Хĕрарăм чунне туятăр-и?

Ку тест – арçынсем валли. Ыйтусене тимлĕн вуламалла, килĕшекен хурава суйламалла.

1. Статистика хĕрарăм арçынран нумайрах пурăннине палăртать. Мĕнпе çыхăннă-ши çакă?

а/ пурнăçа тытса пырасси ытларах арçын хул пуççийĕ çине тиеннипе – 0 очко;

ă/ хĕрарăмсем йывăрлăхпа çине тăрса кĕрешнипе – 0 очко;

б/ хĕрарăм психологийĕн тытăмĕпе – 5 очко.

2. Сирĕн профессипе çыхăннă ыйтусене хĕрарăм лайăхрах тĕшмĕртни тарăхтарать-и?

а/ çапла – 0 очко;

ă/ çук – 5 очко;

б/ калама аптăратăп – 0 очко.

3. Сирĕн шухăшпа, хĕрарăмшăн мĕнле професси ытларах килĕшӳллĕ?

а/ вĕрентекен – 0 очко;

ă/ тухтăр – 0 очко;

б/ кирек мĕнли те, чи кирли – хĕрарăм хăйĕн ĕçне чунтан парăнни – 5 очко.

4. Çине тăрсан пур арçын та хĕрарăма юрату авăрне кĕртсе ӳкерме пултарать тенипе килĕшетĕр-и?

а/ çапла – 0 очко;

ă/ çук – 0 очко;

б/ калама аптăратăп – 5 очко.

5. Интеллигенци шайне тĕрĕслемешкĕн арçын тата хĕрарăм ушкăнĕсемпе эксперимент ирттернĕ. Сирĕн шухăшпа, унăн кăтартăвĕ мĕнлерех?

а/ арçынсен балл пысăкрах;

ă/ хĕрарăмсен кăтартăвĕ лайăхрах – 0 очко;

б/ уйрăмлăх пĕлтерĕшлĕ мар – 5 очко.

6. Паллă хĕрарăмсенчен хăшĕ сирĕн идеала çывăх?

а/ Мария Склодовская-Кюри – 5 очко;

ă/ Мерлин Монро – 5 очко;

б/ Маргарет Тэтчер – 5 очко.

7. Хăтланăвне мĕне тĕпе хурса пурнăçлать хĕрарăм?

а/ шухăшлава – 0 очко;

ă/ туйăма – 0 очко;

б/ лару-тăрăва тата кăмăлне кура шухăшлавпа туйăма пăхăнса – 5 очко.

8. Çын хăйне алла илеймесĕр çухăрашни – ăс-тăн чирĕ, вăл:

а/ хĕрарăмсен кăна пулать – 0 очко;

ă/ хĕрарăмсем те, арçынсем те унпа аптăраççĕ – 0 очко;

б/ хăш-пĕр арçыннăн та тĕл пулать – 5 очко.

9. Хĕрарăм кăмăл-туйăмĕ час-часах улшăнни мĕнпе çыхăннă?

а/ шалти йĕрке çуккипе – 0 очко;

ă/ тĕрĕс мар воспитани илнипе – 0 очко;

б/ физиологипе – 5 очко.

45-25 очко. Хĕрарăм чунне лайăх пĕлетĕр, ăна ăнланатăр. Вĕсем сирĕншĕн партнер вырăнĕнче – ытлашши хурламастăр та, çĕклеместĕр те. Эсир те кăмăл-туйăм енчен хытă мар. Хăвăра хĕрарăмсемпе тытма пĕлетĕр, юрататăр, пĕрле пулма хавас, вĕсем те сире кăмăллаççĕ. Савнийĕр арçынсене сирĕн пекех лайăх ăнланать тĕк пĕрлехи пурнăç ăнăçлă та телейлĕ иртĕ.

25-15 очко. Иккĕленӳ çук, хĕрарăм хăтланăшне шута илсе эсир хăвăра мĕнле тытмаллине пĕлетĕр. Çавна пула сахал мар ăнăçнă сире. Анчах та чун тĕпĕнче эсир хĕрарăма арçынран аяларах шая лартатăр. Хĕрарăм çитменлĕхĕсем, хăш-пĕр начар ен арçынра çук имĕш. Шухăша уççăн палăртмастăр, ку кирлех те мар. Хĕрарăм çинчен питĕ нумай пĕлетĕп тенипе хăвăра джентльмен пек туятăр.

15-0 очко. Хĕрарăма пачах ăнланмастăр. Çавăнпа йăнăшатăр та. Чăн-чăн ăнăçу та, телей те сирĕнтен аякра. Хăвăр таврашри хĕрарăмсене лайăхрах ăнланма вĕренесси çинчен шухăшламаллах.

Лидия САРИНЕ

Çĕнĕ çын

Качча кайсан темĕн те куратăн çав. Пурнăç начар теççĕ те... Ĕлĕкхипе танлаштармалла мар.

Питĕ юратса пĕрлешрĕмĕр. Эпĕ кӳршĕ ялтан, Улаксар хĕрĕ. Аслăяла качча килтĕм. Эпĕ-и?! Эпĕ питĕ хӳхĕм пулнă. Ну, măшăрăм та маттурччĕ. Вăл тĕреклĕ, илемлĕскер. Мĕн чухлĕ ăмсанатчĕç пире. Ман çине пĕтĕм каччă пăхатчĕ. Хăва пек яштака, çинçе пилĕклĕскер, сăнран та питĕ чипер. Çӳçĕм кăтра. Çынсем пек вăрăм çивĕтсемпе çӳресе кураймарăм паллах. Анчах ку мана пĕрре те чăрмантарман. Хăшĕсем авă тата та илĕртӳллĕ пулас тесе çӳçĕсене укçа парса кăтралаттараççĕ.

Ух, шеремет каччи! Ун чухне Чурачăкра çулсерен ярмăркка ирттеретчĕç. Мĕн пур таврари ялтан пухăнатчĕç унта. Уйрăмах хĕрлĕ морс килĕшетчĕ, шăрăхра ăна ĕçсен пĕтĕм чун канатчĕ. Эй, пĕтĕм каччăн куçĕ хĕрсем çинчеçке. Вĕсем те, хăйсене кура мар, çырла сăнлă, пурçăн тутăрлă хĕрсене кăна суйлаççĕ тата. Яшсен хушшинче те пурте чаплах мар, лутрараххи те тĕл пулать. Хĕрсен хушшинче те çаплах: хăшĕ пĕчĕк, хăшĕ хытанка... Эпир вара, Иванпа иксĕмĕр, шăп та лăп пĕр пек. Хайхи каччăсем пире каруççельпе ярăнтарасшăн ĕштеленеççĕ. Пĕри те пĕри çулăхать. Хаваслă кĕвĕ хăлхана çурать. Пурте ярăнасшăн, уйрăмах ачапăча хĕвĕшет. Вĕсем «лаша», «сурăх», «качака» утланаççĕ. Эпир «çунашка», «тăрантас» çине вырнаçса ларнă. Манăн çире – çутă кăвак штапель кĕпе, пуçăмра пилеш тĕслĕ пурçăн тутăр. Атте туянса панă, Ишек пасарĕнчен. Вĕççе каясла çаврăнатпăр, йĕри-тавра хура халăх пирĕн çине пăхать. Иван мана ыталать, питĕм çумне питĕ ачашшăн сĕртĕнет. Ах, чĕрем сиксе тухать. Таçта... кăкăрта чуна хускатакан асамлă туйăм вылять. Çав вăхăтра калама çук ырă... Ах, анчах! Пĕтĕм çын пирĕн çине пăхнăн туйăнать. Именнипе пит çăмарти çунса тухать. Эпĕ пуçа пĕкетĕп. Кунта ывăç тупанĕ çинчи пекех.

– Эсĕ калама çук хитре, – пăшăлтатать каччă. – Сана никама та памастăп. Эсĕ – манăн. Тольксă манăн. Илтетĕн-и? Пĕтĕм ярмăркки пе те сана çитекенни çук.

– Темĕн ан сӳпĕлтет-ха, – пуçа айккинелле пăратăп эпĕ. – Ой, пирĕн çине пăхаççĕ. Кай-ха.

Вăл мана хăй çумне тата хытăрах çупăрлать. Тар юхтарса купăс калакан арçын çумĕнче тепри ташласа тăрать. Хушăран вăл темле йĕс шăнкăрав кăларакан хатĕрсене пĕр-пĕрин çумне чанк! та чанк! тутарать. Ун пек телейлĕ самант пурнăçра урăх пулнă-ши? Аса илсен... Эх!

Çав каç ирччен çӳрерĕмĕр. Ир енне тин киле кĕртсе ячĕ. Хапха алăкĕ çумне хĕстерсе лартрĕ те пуçларĕ чуп тума... Тутана татса илетчĕ пуль. Çӳхе тута хăпарса тăрать уш, ытлашши хытă чуп тунипе. Ай-яй, туру-у! Çын мĕн калĕ?!

– Ванечка, – тетĕп, – кун пек тутапа киле кĕрсен... Пĕлетĕн-и, атте-анне вĕлтĕреннех ăшалĕ. Эсĕ мĕн туса хутăн-ха-а?

Тĕрĕссипе, хам ăна пĕрре те çилленместĕп. Унран пĕрре те уйрăлас килмест.

– Ыранах евчĕсем яратăп, – хĕрӳллен се каять вăл. – Атту сана Кучан Кули вăрласа каять.

– Аюк, эпĕ... ой, пĕлместĕп. Хăратăп.

– Камран?!

– Аттерен. Вăл çав тери «строкий» пирĕн.

– Ан хăра. Эпĕ унпа хамах калаçатăп, – тет Иван мана куçран пăхса. – Арçынпа арçын калаçса татăлатпăр. Курсах тăр.

Эпĕ çăлтăрсем çине ĕмĕтленсе пăхатăп. Ун çумне татах та татах йăпшăнатăп. Автансем пĕрин хыççăн тепри авăтма пуçларĕç. Куçăм хупăнасшăн. Анчах тутлă ыйхă пирки шухăшлама та май çук. Кĕçех ĕне сумалла... Çапах чун çĕкленӳллĕ. Манăн юрлас килет. Пĕтĕм тĕнче илемлĕ.

Вăт и вçо. Эпĕ – кĕçĕн çын. Аслăял кинĕ. Ун чухне эпир Улаксарти кирпĕч заводĕнче ĕçленĕ. Кашни кунах ĕçе çӳренĕ. Çăмăл ĕç мар вăл – кирпĕч кăларасси. Ывăнса килетĕн те – кил-çуртра, хуçалăхра тепĕр ĕç пуçланать. Ай-яй унта... Мĕнле кăна ĕç çук-ши?! Каç пуласса çеç кĕтеттĕм. Юрать çынна çывăрмалла тунă. Унсăрăн тăрăнса анма та пулать пуль. Ванечка ытамĕнче ывăнни те таçта кайса кĕрет. Ахаль каламаççĕ ĕнтĕ, юрату пурăнма вăй хушать, хавхалантарать тесе.

Хунямапа хунеçене юрама... Пурăнса курнисем пурте пĕлеççĕ. Уйрăмах хунеçе хытă чунлăччĕ. Йĕркесем çирĕп кунта, хамăн атте-анне патĕнчи пек мар. Пĕррехинче каçхи апата лартăмăр. Сĕтел çинче çĕр улми... хуппи пăсланать. Лайăхрах пăхатăп – чăнахах. Эпир кунашкал апат çисе курман. Шуратман çĕр улмине уйран-турăхпа çинĕ-ха. Чăвашăн чи лайăх апачĕ шутланать вăл. Анчах çĕр улми хуппине нихăçан та пĕçерсе çисе курман. Ара, этем-сем-çке-ха, выльăх мар. Мĕнле çемье пулчĕ ку? Кун пеккине пĕлмен. Тĕлĕннипе куç чарăлчĕ.

– Так! – терĕ хуньстарик. – Çĕр улмине пысăкрах, çăкăрне сахалрах çыртăр.

Эпĕ, кĕçĕн çын, пĕр çĕрелле пăхнă та шăп ларатăп. Ку măшкăла чăтăп-и? Нумай шухăшласа тăмарăм, алăри кашăка пăрахрăм, çăкăр чĕллине хутăм та, сĕтел хушшинчен тăтăм та тухрăм. Каçхи апата Улаксара, тăван киле вĕçтере патăм. Пăхатăп, ман хыççăнах Иван пырать. Тĕрĕс. Йĕппипе çиппи пĕрле пулмалла. Эх, килти апат епле тутлă! Анне серте яшки пĕçернĕ. Тăварлă аш, хăймапа çăрнă çăмах янă унта. Хырăм сарăличчен çинĕ хыççăн каялла, килелле, утрăмăр. Ванечка шăхăркаласа пырать. Эпĕ хирти чечексене пуçаратăп. Тĕттĕмпе киле кĕтĕмĕр. Йăпшăнса каялла тухрăмăр. Лупасай тăрне хăпарса кайрăмăр. Унта ватă çынсен пашлаттарса сывлани, харлаттарни те илтĕнмест. Унта шăпчăк, юрату сасси...

Телейлĕ эпĕ. Никамăн та çăмăл пулмасть вăл пурнăç тени. Ваттисемпе çамрăксене пĕрле уйрăмах кăткăс. Ватăсем çамрăксене ăнланасшăн мар. Хăйсем çамрăк пулнине манса каяççĕ-ши? Çамрăкĕсем ниепле те ватăсене пăхăнасшăн мар. Яланах çапла çамрăк та вăй питти пулассăн туйăнать ахăр. Халĕ пирĕн ывăлсем, кинсем, кĕрӳсемпе мăнуксем. Вĕсем килсен пӳрт тулать. Чун хĕпĕртесе çеç тăрать. Пĕрисем пулă тытаççĕ – пирĕн хамăрăн кӳлĕ пур. Теприсем мунча хутаççĕ, теприсем шашлăк хатĕрлеççĕ. Ача сассипе кил-çурт та илемлĕ. Эпĕ кăмака умĕнче. Манăн пурне те вĕри кукăльпе сăйлас килет. Савнă măшăрăм ялан ĕçлет, ватăлма та пĕлмест. Хитре хĕрарăмсене курсан йăл-йăл кулать. Эпĕ халĕ те Чурачăк ярмăркки не аса илетĕп. Шел. Хальхи çамрăксем ун пеккине курмаççĕ. Дискотека. Шăв-шав... Купăспа вăййа тухнине те курма çук.

Каç пулчĕ. Пирĕн килте çаплах ача-пăча сасси илтĕнет. Пахчара кăвайт çунать. Çамрăксем шашлăкпа аппаланаççĕ. Вĕсем хаваслăн кулни, каласни илтĕнет. Милĕк шăрши кĕрет.

– Карчăк, атя мунчана. Унта халĕ вĕри мар, – илтĕнет măшăрăн сасси. – Ман валли таса çи-пуç ил. Эпĕ сăра илтĕм. Ох, лайăх.

Ах, епле кăмăллăн илтĕнет сасси. Тӳрех паллă. Самаях лекнĕ пулас. Эпĕ-и... Эпĕ ăна пĕр курка сăра ĕçнине те пĕлетĕп вĕт. Юрĕ ĕнтĕ. Савăнтăр. Ывăлĕсемпе, кĕрӳшĕсемпе кашни кунах тĕл пулаймаççĕ-çке. Çĕр улми кăларса пĕтернĕ. Ĕçсене пуçтарнă. Чунра лăпкă. Мунча та тутлă пулĕ...

СĂВĂ СĔВЕМĔ

Николай ТЕВЕТКЕЛ

Юрату юмахĕ

Эсĕ мар маншăн пурнăç çанталăкĕ,
эсĕ мар маншăн ĕмĕт ĕнчи!
Юрату халапне эп каламăп-и?
Пулнă маншăн тахçан эс сад алăкĕ,
пулнă маншăн телей чӳречи.

Яш кунсен ытарма çук айванлăхĕ
сирĕлет шурă-шурă тĕтрен.
Çамрăк ĕмĕр – ут мар. Кăлăх
ан шăхăр!
Иртнĕ кун çутине ĕнтĕ кам пăхĕ?
Уйрăлар шăпланан кĕвĕрен.

Ӳпĕн, тĕлĕк тĕнчи – чун йăпатмăшĕ!
Ăш пӳртре сивĕ çил кĕрлевне
итлесе ларнăн пĕчĕк чухне,
маншăн эс илĕртӳллĕччĕ. Тахăшĕ
пырса уçрĕ те пӳрт алăкне,

динго йытăсем пек кĕчĕç харăссăн
çивĕч шăллă çулсем вăркăнса,
эсĕ – ĕмĕтсенчи шурă парăсăм –
чăтаймарăн: шарт çеç çурăлса
путрăн чун авăрне, çĕтрĕн сарăмсăр...

Эс пулман манăн пурнăç çанталăкĕ!
Эс пулман манăн ĕмĕт ĕнчи!
Юрату халапне эп каламăп-и?
Пулнă маншăн тахçан эс сад алăкĕ,
пулнă маншăн телей чӳречи.

Уйрăлу

Сĕтел çине кĕрхи çилпе
сап-сарă çулçă ӳкрĕ.
Йывăççене шур чĕнтĕрпе
хĕл васкамасăр пӳкрĕ.

Сехет йĕппи хуллен шăвать,
чарма май çук, чĕкеçĕм.
Каласта рать чунри хăват:
«Тĕнче илемĕ эсĕ!»

Çулсен инçетĕнчен кăна
ман тунсăха сăнарĕ
ас илӳпе килен хăна –
юратнă çын сăнарĕ.

Эп тĕлĕнтермĕш саманта
каллех куратăп уççăн.
Пĕрре чуна вăл амантать,
тепре сиплет вăл, тусăм!

* * *

Çурхи вăрман шавне
эп юратса итлетĕп:
юмах пек вăл асамлă.
Çĕн кунăн чаршавне
сар хĕвелпе сиретĕп:
епле çĕр-шывăм аслă!

Çĕн ĕмĕтпе çавра
çул çӳреве тухатăп
тăван ялтан эп харсăр.
Çак хӳхĕм кун вара
ма хам чыса çухатăп,
ма пулăп пархатарсăр?

Тен, хальлĕхе, чăнах,
эп ятсăр çул çӳревçĕ?
Мана капла та юрĕ.
Туссем хаваласнсах
ман юрăпа киленчĕç:
вăл – ĕмĕт хывнă юрă!

Çунатлă кăмăл

Ăс-хакăлпа, ĕçпе çын ăшăтнă çĕре,
çак ăшă саланать ӳт-пĕвĕмре
сисмесĕр.
Кăвар чăмăрккиллĕ çунать вара чĕре,
вĕрилĕхĕ куçать сăмахсене сӳнмесĕр.

Ĕç – пирĕн пултару. Ăс –
çиçĕм ялтăравĕ,
ултавăн сехрине хăпартмăш аслати.
Таса çынсемшĕн вăл – чи сиплĕ
çумăр шавĕ,
çĕр илемне унпа кӳрет яшши-ватти.

Çĕр ăшшине илсе çӳретпĕр хамăрпа.
Çĕр хӳтлĕхĕ эпир – ăна савакансем:
унра – телей курки, хавхалану
саманчĕ.

Тăратăп эп ĕçре тарланă кăкăрпа:
çĕр ӳсĕмĕ – эпир. Çунатлă
кăмăлсем –
илемлĕн йăлкăшан кун-çулăн
асамачĕ.

Хырлăх

Çилпеле ши! шăхăрнăн
туйăнчĕç хырсем.
Йăлкăшаççĕ пăхăррăн
йăрăс вуллисем.

Ак çитет те вăрăм çĕр –
кун çути сӳнет.
Хыр вăрманĕ ăрăмçă
сассипе пуплет.

Чăркăшланчĕç, тăрăнчĕç
хырсене çилсем.
Ӳкерчĕç те вăрăнчĕç
пĕлĕте кӳлсе.

Кайрĕ тăвăл ахăрса –
хырлăх кĕр! кĕрлет.
Мĕскĕн мар вăл – харсăр çав:
«Парăнмастăп!» – тет.

Çĕнейсерĕ – чарăнчĕ
тăвăл лăпланса.
Çутă шуçăм чатăрĕ
карăнать часах.

Ир.
Хĕвел çар пуçĕ пек
тухрĕ ерипен:
савăнăç куççулĕпе
çĕр йĕрет иккен.

«Аннесĕр атте çулталăк та пурăнаймарĕ...»

Атте вилсен эпир аннепе иксĕмĕр ун пирки пĕр интервью та памасса калаçса татăлнăччĕ. Татьяна Масленникова хăй 20 çул Николай Еременкăн гражданла арăмĕ пулнине пĕлтерсен çавăнпах чĕнмерĕмĕр. Таня пĕтĕм тĕнче илтмелле çапла çирĕплетет – паллă актер ăна кăна юратнă имĕш, арăмне Вера Титовăна вара хисепленĕ. Çавă çеç. Унра тарăху капланнине лайăх ăнланатпăр-çке – аннерен уйрăлсан мĕншĕн качча илмен апла ăна атте?

Анчах аттен кĕçех çырăнмасăр пурăннă иккĕмĕш арăмĕ сиксе тухрĕ – Люся. Вăл та, режиссер пулăшаканĕ, аттен юратăвне пайлама хăтлансан манăн чăтăм пĕтрĕ. 25 çула тăсăлнă – аттепе анне шăпах çавăн чухлĕ пурăннă – хутшăнусем çинчен хам мĕн пĕлнине каласа кăтартас килчĕ: йăлтах манăн куç умĕнче пулса иртнĕ-çке.



Кăтра çӳçлĕ, симĕс куçлă каччă

Атте актер çемйинче çуралнă. Асатте Николай Еременко – СССР халăх артисчĕ, асанне Галина Орлова – Беларуç халăх артисчĕ. Аттен ачалăхĕ чаршав хыçĕнче иртни каламасăрах паллă ĕнтĕ. Мускавра унăн пултарулăхне Сергей Герасимовпа Тамара Макарова хак панă – атте çапла студентсен йышне лекнĕ.

Кăтра çӳçлĕ, симĕсрех куçлă, уççăн кулакан каччă ВГИК студенткисене тӳрех тыткăнланă. Анчах та анне ытти хĕр пек ун хыççăн чупман. Вăл аттерен пĕр çул аслăрах пулнă, качча кайса уйрăлма ĕлкĕрнĕ. 24-ри анне кайса ӳкмелле кĕске юбкăпа çӳренĕ /эпĕ ун пеккине тăхăнса та курман/. Ун чухнех куçлăхпа çӳрекенскер çапах та çăмăлттай курăнман. Анне МПУ истори факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Вăл, чăн та, тухтăр пулма ĕмĕтленнĕ, анчах та химипе туслă пулман. Шкула та килĕштермен вăл, çавăнпа ВГИКа ĕçлеме вырнаçнă.

Хăйне пурте килĕштерни, анне вара ăна асăрхаманни "çаклатнă" та аттене. Пĕлĕшĕсем аннене актерсен ушкăнне явăçтарнах. Кĕçех иккĕшĕ хутшăнма пуçланă. Туй сывхарса пынă.

Анне кукамайпа кукаçине питĕ хисепленĕ, çавăнпа тĕл пулу умĕн питĕ пăлханнă. Юрий Титов совет тапхăрĕнче пысăк чиновник пулнă. Вĕсен Одинцовăри дачинче паллашнă та пулас кĕрӳшĕпе. Малтанах питĕ пăлханнă атте дачăна пырса кĕрсенех хăйне киле лекнĕнех туйнă – ăшшăн та уççăн кĕтсе илнĕ ăна, тăван ывăлĕ пекех йышăннă. Атте хăй те вĕсене питĕ килĕштернĕ. Каярахпа хăта-тăхлачă та çав дачăрах паллашнă. Аннене те асаттепе асанне тӳрех килĕштернĕ. Хирĕçӳллĕрех лару-тăрура яланах анне майлă пулса ывăлне хăтăрнă.

Хваттер ыйтăвĕ тӳрех татăлнă – кукаçи çамрăксене икĕ пӳлĕмлине парнеленĕ. Чăн та, унта питĕ тăвăрччĕ, ваннăра ларса çăвăнмаллаччĕ, анчах та – уйрăм хваттер. Пушшех те – ĕç те юнашарах.

Йăлт – ачашăн

Эпĕ палăртнинчен маларах çуралнă – анне дачăра сикесике вылянă-мĕн. Атте мана малтанах алла илме те шикленнĕ – питĕ пĕчĕк пулнă эпĕ, 3 кг та тайман. Каярахпа, ашшĕн телейне туйса илсен, питĕ юратнă. "Красное и черное" фильмпа Парижа кайсан анне аттене унта мĕн туянмаллине çырсах парса янă – вăл вăхăтра Союзра лавккасем пушăпа пĕрехчĕ. Акă атте таврăннă, чăматанне уçнă, унта вара – лăк тулли ача япали! "Ман валли вара?" – чăтайман анне. "Каçар, ача-пăча лавккине кĕтĕм те... Укçана пĕтерсе пăрахрăм", – нимĕн те калайман атте. Анне кӳренмен. Ашшĕ пепкине çав тери юратни япăх-и вара?

Эпир кашни çулах Пицундăра канаттăмăр. Атте хĕвел питтинче шăранма юратмастчĕ. Ишме пуçласан вара эпир унпа таçта çитиех каяттăмăр та анне питĕ пăлханатчĕ. Атте кинематографистсен ушкăнĕнче шавлăн канма юрататчĕ. Çапах та унăн юлташĕ нумай марччĕ – Талгат Нигматуллинпа Вадим Спиридонов кăначчĕ. Шел, иккĕшĕ те пурнăçран ир уйрăлчĕç.

Аттен "юратнă" икĕ арăмĕ вăл ĕçкĕç юлташĕсемпе канма юратнине калаççĕ те – ĕненместĕп. Вăл вăхăта килте ирттерме кăмăллатчĕ, ĕçпе чирленĕччĕ.

Апата тиркеместчĕ тата вăл. Хăй вара лавккаран сумки-сумкипе сĕт юрварĕ сĕтĕретчĕ. Çĕр улмирен апат та хăех хатĕрлетчĕ – кăмăлĕ пур чух. Анне ĕçрен таврăнатчĕ те пĕр кухня таса мар савăт-сапа куратчĕ. Çакăншăн вăрçăнмастчĕ – атте чăнах та тутлă пĕçеретчĕ. Эпир унăн рецепчĕпе усă курса та пăхрăмăр – çук, унăнни пек пулмасть. Вăт пăта çапма пĕлместчĕ вара вăл. Эпир унпа обойсене йăлт пăсса пĕтереттĕмĕр. Анне килетчĕ те пуçне пăркала-пăркала майлатчĕ пирĕн хыççăн.

Мана вĕсем ним тума та хистеместчĕç. Çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чух эпĕ çӳçе çамка тĕлĕнчен касрăм. Атте анне патне чупса пычĕ: "Калаха ăна капла килĕшменнине!" "Пĕр-икĕ кунран çакна хăех ăнланса илĕ", – терĕ кăна анне. Çаплах пулчĕ те...

Начар пурăнман эпир. Телевизор кăна виççĕччĕ. Мана артист çулĕпе ярасшăн пулмарĕç вĕсем. Эпĕ хам та туртăнман. Çапла акăлчан тата француз чĕлхисене вĕрентĕм.

Арçын – çемьешĕн

Атте килте спорт çи-пуçĕпе çӳретчĕ. Çын çине тухма вара тĕплĕн хатĕрленетчĕ – тĕкĕр умне çĕр хутчен те пыратчĕ. Актерсен ачисем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле урама тухма юратманнине калаççĕ. Мана вара ку питĕ килĕшетчĕ. Эпĕ аттепе мăнаçланаттăм кăна.

Вĕсем уйрăлма шухăшланă чухне эпĕ килте пулман – 21-ре качча тухрăм та атте-анне пулăшнипе Химки хулинче хваттер тара илсе пурăнтăмăр.

Туйра асаттепе асанне те пулчĕç. "Арçыннăн, кирлĕ пулсан, çемйишĕн пурнăçне те шеллемелле мар!" – Коля асаттен сассине эпĕ питĕ юрататтăм. Аттен те унăнни пекех хитреччĕ. Асаттепе иккĕшĕ питĕ туслăччĕ, кун сиктерсе шăнкăравласа тăратчĕç. Асатте чирлесен атте ăна çăлас тесе темĕн те турĕ, анчах та вилĕме çĕнтерме май килмерĕ. Николай Еременко-асли вăрçăра тыткăна лекнĕ, сывлăхне çавăнта пĕтернĕ. Ăна пытарнă чухне атте хуралсах ларнăччĕ. "Еременкăсем арăмĕсене пăрахмаççĕ!" – çапла каланăччĕ асатте аттене хăй пурăннă чух. Анчах пурнăçра

палăртни яланах пурнăçланмасть çав...

Уйрăлу

Вĕсем уйрăлма шухăшланине пĕлсен эпĕ тĕлĕнтĕм. Ытла та пĕр-пĕрин валли çуралнăччĕ вĕсем. Кинематографистсен ушкăнĕнче аннене, паллах, йăлт пĕлтерсе тăратчĕç. Мăн кăмăллăскер нихăçан та шăв-шав çĕклеместчĕ. Атте хăй вара нихăçан та нимĕн те йышăнмастчĕ – йăлтах суя, элек... Юлашки тумлам Люся пулчĕ ахăртнех...

Уйрăлнă хыççăн хваттере сутрĕç. Анне кукамай патне пурăнма куçрĕ, атте урăх хваттер туянчĕ. Халĕ Люся çирĕплетнĕ пек ăна валли мар, хăйне валли.

Атте аннесĕр пурăнаймастчĕ – арăм кăна марччĕ вăл, юлташ та, канашçă та... Пирĕн çемьере юлашки сăмаха анне каланă, атте яваплăха хăй çине илме юратмастчĕ. Ларутăру кăткăслансан анне каллех тĕвве салтма татăклă сăмаха хăй каланă, атте яланхи пекех хирĕçлемен – çавă çеç.

Уйрăлнă хыççăн аттепе тăтăшах тĕл пулаттăмăр. Пĕрреххинче вăл анне пирки сăмах хускатрĕ. Çавăн чухне манăн унăн хутне кĕмеллеччĕ: "Кай, чуп, тавăр аннене каялла!" – темеллеччĕ. Эпĕ вара вĕсен хушшинче йăлтах пĕтнĕ тесе шухăшланă. Паян та хама çакăншăн каçараймастăп. Атте манăн сăмаха кĕтнĕ-çке... Анне мирлешме хирĕçлессинчен шикленсе эпĕ хута кĕрессе кĕтнĕ. Вăл яланхи пекех татса парас ыйтăва хăй çине илеймерĕ...

Юлашки тĕл пулу

Юлашки тĕл пулура эпĕ питĕ васкарăм. Кĕçех хыпар çитрĕ: "Николай Еременкăн инсульт". Аттене юлашкинчен куракан çын анне пулчĕ – мана реанимацие кĕртмерĕç. Унтан тухсан мана нимĕн те каламарĕ, анчах эпĕ хамах ăнлантăм... Больницăна кашни çур сехетрен шăнкăравласа тăтăмăр – улшăну çук. Ирхине хыпар сарăлчĕ – Николай Еременко текех çук. Эпĕ ухмаха тухасла макăрма пуçларăм. Пытарнă çĕре мана илсе те каймарĕç. Ку лайăх та пулчĕ-тĕр – аттене чĕррине кăна ас тăватăп...

Турă мĕн те пулин курать-тĕр

Ăна пытарса таврăнсан анне каларĕ: "Оля, санăн 10-ри йăмăку пур – Таня". Масленникова та, Люся та аттепе сыв пуллашма пынă. Аттен тата ача пуррине анне хăй те çавăн чухне кăна пĕлнĕ. Аттене питĕ лайăх пĕлнипе калатăп – Масленниковăна çуратма ыйтман вăл, хĕрарăм хăй ирĕкĕпе тунă çакна. Анчах ача айăплă мар. Атте ăна хăйĕн хушаматне панă. Ку ăна хăйне те çырлахтарнăтăр – пĕчĕк ача ашшĕ-амăшне хăйсене çамрăкрах туйма пулăшать. Таня-кĕçĕнни манпа хутшăнасшăн пулнă, анчах атте чарнă. Таня-аслине те вăл çаплах каланă: "Сире пăрахмăп, анчах та Вера е Оля патне шăнкăравлама ан хăйнă пултăр – çыхăнăва тӳрех татăп".

Аттене пытарнă чух анне Масленниковăна: "Николай ĕмĕр тăршшĕпех сана кăна юратнă", – тенĕ пулать. Епле калама пултартăр-ха вăл çакна – эпир вĕсем пирки пачах та пĕлмен вĕт.

Мĕн сиксе тухнă-ха? Мĕн пулнă аттене? Люся атте ĕçке ярăннипе унăн пуç мимине юн кайнине ĕнентерет. Çапла, атте ĕçмен çын пулман, анчах та аннепе пĕрле пурăннă чух унăн ку енĕпе нимĕнле кăткăслăх та пулман. Ĕçсе килсен те вăрçăннине, хирĕçнине нихăçан та курман эпĕ. Анне унăн пуçĕ ыратсан мĕн ĕçтермеллине пĕлетчĕ. Чĕри аптратсан е юн пусăмĕ хăпарсан та анне эмел алă айĕнчех тытатчĕ. "Эпĕ юнашар пулнă тăк Коля вилместчĕ", – çакна анне чунтанах ĕненет. Ĕненмесĕр тăма сăлтавĕ те çук. Анчах юлашки сехетре унăн çумĕнче Люся пулнă, талăка яхăн тăн çухатса выртнă хыççăн кăна атте патне васкавлă пулăшу чĕннĕ...

52-ре вилме шухăшламан, паллах, атте, çавăнпа еткерлĕх хучĕ те пулман. Хваттере виççĕн пайларăмăр: эпĕ, Танякĕçĕнни тата асанне. Хваттере кĕрсен кайса ӳкеттĕмĕр – унта такам бомба пăрахнă тейĕн. Урай таран сӳтсе кайнă. "Турă мĕн те пулин курать пулĕ-ха", – терĕ кăна анне...

Людмила хăйсем аттепе иккĕшĕ пĕрлешме шухăшланине палăртать. Аттен хушаматне суд урлă илчĕ вăл. Анчах ку та ăна вырăс Анджелина Джолийĕ пулма пулăшмарĕ...

Каçартăмăр...

Аннесĕр тăрса юлсан атте пурăнаймарĕ... Хăй мĕн тери йăнăш туса хунине ăнланнă хыççăн вăл хăйне пĕр чарăнми кăшланă ахăртнех. Çакă пĕтернĕ те ăна. Люся-и? Ун пек хĕрарăмсем арçынсен пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнмаççĕ. Вăхăтлăх киленӳ, çамрăклăха тăсма хăтланни. Хăйĕн Верисĕр атте çулталăк та пурăнаймарĕ...

Анне – ăслă хĕрарăм. "Эпир аçупа пысăк пурнăç пурăнтăмăр, çавăнпа çав хĕрарăмсемпе халăх умĕнче тавлашса унăн ятне вараламăп, – тет вăл. – Мана ĕмĕрлĕх аса илӳ юлчĕ..." Аттене каçартăмăр эпир. Анне çулсерен унăн Минскри вил тăприйĕ çине каять – асаттепе асанне ыйтнипе унта пытарнă ăна.

Тĕлĕкĕмсене яланах килет атте. Эпĕ халĕ иккĕмĕш упăшкапа пурăнатăп. Аннепе кукамай та пирĕнпех. 34-ра турă парне кӳчĕ – хĕр çуратрăм. Аня кукашшĕне хывнă ахăртнех – макăрнă чухне те тĕкĕр умне чупать: "Куççульпе мĕнле курăнатăп эпĕ?" Анне мăнукĕ кукашшĕн çулĕпе каясса шанать. Чăн та, Аньăн – ашшĕн хушамачĕ. Анчах та эпир упăшкапа калаçса татăлтăмăр: енчен те ывăл çуралас тăк манăн хушамата парăпăр – Еременко...

/«Караван историй»/.

И-ХИ-ХИК

Арçын:
– Хĕрарăм вырăнĕ – тĕпелте!
Арăмĕ:
– Юрать. Çывăрмалли пӳлĕмре пĕччен те аптăрамастăн-им?..

* * *

Вăрлас килет, анчах хăратăн-и? Эвакуатор служби водительсене ĕçе йыхравлать!

* * *

Самăр çынсем яланах ырă кăмăллă. Ăçта кайса кĕрĕн – çапăçаймаççĕ те, тараймаççĕ те...

* * *

Çыннăн пуç мимийĕ мĕн çуралнăранпах талăкĕпех мĕн чарăнми ĕçлет теççĕ. Калăр-ха: экзаменра мĕн пулать вара ăна?

* * *

Ĕнер хулара туй пĕркенчĕкĕ уртса янă пике чупнине куртăм. Вăт шырать тĕк – шырать. Пур хĕр те унран тĕслĕх илсен никам та ватта юлмĕччĕ...

* * *

Хĕрарăмсене ăнланма çук. Телей тупасшăн – ăçтиçуксене качча тухаççĕ. Начарланасшăн – çĕрле кăлпасси çиеççĕ. Упăшкисемшĕн кăсăклă пуласшăн – сериал пăхаççĕ. Вăт арçынсем тĕлĕшпе йăлтах ăнланмалла: сăра ĕçес килет – сăра ĕçеççĕ...

* * *

– Эсĕ манăн экс-арăма ас тăватăн-и? Мĕнлерех кахалччĕ, усалччĕ, укçана йăлт тăкаклатчĕ...
– Паллах, ас тăватăп.
– Халĕ вăл пирĕштие çаврăнчĕ.
– Мĕнле майпа? Хăйне куртăн-и е такам каласа кăтартрĕ-и?
– Вăл та, ку тар мар-ха... Хальхи арăмпа танлаштаратăп та...

* * *

– Мĕнле пурăнатăн?
– Шăна ăмсаннă пулĕччĕ...

* * *

– Упăшкăрпа савăшассине кăштах улăштарăр, – сĕнет сексопатолог хĕрарăма. – Калăпăр, вăл юратакан мультик сăнарĕн костюмне тăхăнăр.
– Танк костюмне ăçтан тупам-ши? – шухăша каять лешĕ.

* * *

Пĕчĕк сăн-питлĕ арçын жюльен савăтĕнче çывăрса кайнă.

* * *

Василий сантехник пĕлтерĕвĕнчен: "Пăрăхсене фэншуй саккунĕсемпе килĕшӳллĕн хуратăп..."

* * *

Ĕçлес килмест-и? Темех мар. Forbs журнала уçкаласа пăхкала... Хушаматна тупаймарăн-и? Апла ĕçлемех тивет...

* * *

Ĕнер ĕçре тĕрĕслĕх шырарăм. Тупрăмăр. Паян ĕç шыратпăр.

* * *

– Сан пата ирхи тăваттăра йăнăшпа шăнкăравланинчен хăрушраххи мĕн пултăр?
– Тĕрĕсех шăнкăравлани.

* * *

Мана тамăка ярасшăн-и? Унти эсреметсем мĕн айăпа кĕнĕ тата?

* * *

Сунара эрехпе тухнă арçынсем тискер чĕр чунсемшĕн темĕнле Гринписран та лайăхрах.

* * *

– Арçынпа ача хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур?
– Уйрăмлăхĕ те çакă кăна – ачана хăть няньăпа хăварма пулать.

* * *

Пурнăçри чи кăткăс суйлав – хăш кĕпер урлă каçмалла, хăшне вара çунтарса ямалла...

* * *

Эпĕ вăйлă, яваплă, хăюллă, шухăшланине яланах пурнăçлама хăнăхнă... Вăт тепĕр пилĕк минут... Тепĕр пилĕк минут выртатăп та... тăратăп...

* * *

Кĕсменпе авăсма вĕренмесĕр кимме улăштарнинчен усси пулмĕ.

* * *

Ĕнсерен ачашшăн чуп туни яланах вăрттăн туйăмсене вăратма, хĕртме пулăшать. Ăнланмастăп, метрора çынсем мĕншĕн тарăхаççĕ çакăншăн?

* * *

Ĕçе пула упăтерен этеме çаврăннă çын текех вăй хурасшăн мар – пĕлсе пĕтер унта...

* * *

Маларах кăна-ха çынсем лăпкă мар лару-тăрура шăрпăкпа тăвар туянма хыпаланатчĕç, халĕ – Францире кăларнă эрех тата пармезан...

* * *

АПШна хирĕçле санкци – малашне "ОК" тесе çырма та, калама та чарнă, ун вырăнне "ÇП" аббревиатура сĕнеççĕ: "Çапла пултăр!"

* * *

Раççей пĕр кĕпĕрнинче иртнĕ канашлура 2020 çул тĕлне çĕр-шывра çул-йĕр икĕ хут ытларах сарассине каланă. Юрать-ха çав канашлура ухмахсен ыйтăвне пăхса тухман...

* * *

Çу вĕçленсе пырать. Кашни чӳречеренех илтĕнекен юрă вара çаплах янăрамасть кăçал. Ырра-ши ку???

РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"
УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!
Санаторий "Надежда" желает Вам здоровья, долголетия и приглашает на ОСЕННИЕ СКИДКИ.
Только с 1 сентября по 31 октября 2014 г. стоимость санаторно-курортной путевки – 10 дней:
"Стандарт" – 18000 руб.,
"Пенсионер" – 16500 руб.
К ВАШИМ УСЛУГАМ: ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.
Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.
Спешите, количество мест ограничено!
Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

ПРОДАЮ

4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

5.Блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

7.Срубы для бани. Т. 37-28-74.

8.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, чернозём. Т. 89033583021.

10.Сетку-рабицу от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 389713.

15.Кирпич, к/блок. Т. 89613393363.

16.СЕТКУ-РАБИЦУ от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

19.Гравмассу, песок, керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

20.Сетку-рабицу, ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, **metalservis21.ru**

21.Керамблоки, гравмассу, песок. Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

22.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

23.Гравмассу, песок, бой кирпича, щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

28.Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 89370101054.**

35.Блоки керамзитобетонные от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

47.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 489277, 89033899038.

48.Керамблоки, кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**

53.Отруби, зерно, к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

55.Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 8-987-673-47-54.

62.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

77.ТЕПЛИЦЫ 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

117.ОКНА Чувашии. Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

134.Кирпич любой, **кольца, блоки.** Д-ка манипул-ом. Т. 89033587353.

157.Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

172.Гравмассу, керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 8-927-849-76-74.

316.Гравмассу, песок, керамзит, щебень, бой кирпича, навоз. Доставка. Т. 89051974019.

317.Гравмассу, песок, **щебень,** керамзит, **навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 8-927-850-28-21.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 8-903-066-66-30.

450.КЕРАМБЛОКИ пропаренные, вибропрессованные – **недорого. Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.

518.Гравмассу, щебень, песок речной, карьерный; чернозём, глину. Д-ка. Т. 89520269954.

560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС". Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

УСЛУГИ

51.Бурение колодцев, скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

115.Наркология. Трезвая жизнь. Т. 8-902-663-20-80. *Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

152.Бурение скважин на воду. Т. 89603021293.

229.Кровля, обшивка домов. Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

499.Бурение скважин на воду. Т:. 8-905-198-03-33, 8-987-674-00-30.

513.Чистка колодцев. Т. 89613429059.

575.ЭКСТРАСЕНС. Т. 89876603929.

КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 89625994706.

141.Коров, бычков и лошадей. Т. 8-960-310-98-78.

333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок. Т. 89370144997.

РАБОТА

110.Монолитчики, плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

547.Требуются **ФОРМОВЩИКИ на пр-во керамблоков.** Проживание, з/п высокая. Т. 8937-386-66-29.

СУТАТĂП

580.ÇУРТ /газ, шыв пур/. Элĕк р-нĕ, Вылпасар. Т. 8-927-857-23-54.

«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Сырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7761. Заказ 3143.